Респу...
библиотеки
им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Февраль
15
ВЫРСАРНИКУН
№ 32 (8941)
35-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

И. В. СТАЛИН ЮЛТАШ КИТАЙ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ ХАЛĂХ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ МАО ЦЗЭ-ДУН ЮЛТАШ ПАТНЕ ЯНĂ ТЕЛЕГРАММА (1 стр.)

МАО ЦЗЭ-ДУН ЮЛТАШ СОВЕТЛĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ РЕСПУБЛИКĂСЕН СОЮЗĔН МИНИСТРСЕН СОВЕЧĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ И. В. СТАЛИН ЮЛТАШ ПАТНЕ ЯНĂ ТЕЛЕГРАММА (1 стр.).

А. Я. Вышинскийпе Чжоу Энь-лай юлташсем пĕр-пĕрин патне янă телеграммăсем (1 стр.).

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕнче (1 стр.).

Февралĕн 22-мĕшĕ—вырăнти Советсене суйламалли кун (2 стр.).

ПРОПАГАНДИСТСЕМПЕ АГИТАТОРСЕНЕ ПУЛĂШМА: Ф. Белохвостов. — Халăх пурнăçне тăтăшах лайăхлатасси тата культурăллă шайне ÿстересси — социализмлă общество законĕ (2—3 стр.).

Чăваш АССР Министрĕсен Советĕнче. Промысла кооперацийĕн артелĕсемпе инвалидсен кооперацийĕн артелĕсем 1952 çулхи IV-мĕш кварталта социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсем çинчен (3 стр.).

Китайра ĕçсыннисемшĕн тăрăшни (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Колхоз пурнăçĕн Сталинла Уставĕ

Ялхуçалăх артелĕн Уставне колхозник-ударниксен Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш съезчĕ 1935 çулхи февраль уйăхĕнче йышăннă. Съезд ĕçне тата Устав çырса хатĕрлес ĕçе Сталин юлташ хăй ертсе пынă. Ялхуçалăх артелĕн Уставне колхозниксем кăмăлласа, ăна колхоз пурнăçĕн Сталинла Уставĕ тесе ят пачĕç.

Коммунистсен партийĕн колхоз строительствинчи политикине практикине пур енĕпе те пĕтĕçтерсе, ялхуçалăх артелĕн Уставĕ колхозсене малалла тĕреклетсе пырас тĕлĕшпе тĕп кăтартусем панă. Устав ялти коллективлă социализмлă пысăк хуçалăха мĕнле йĕркелесе тытса пымаллине палăртнă, колхозниксемпе колхозницăсене пуян та культурăллă пурнăç тумалли шанчăклă çула кăтартса панă.

Артель членĕсем,—тесе çырнă Уставра,—хăйсен артельне çирĕплетсе пыма, тÿрĕ кăмăлпа ĕçлеме, колхоз тупăшĕсене ĕçленĕ тăрăх валеçме, общество харпăрлăхне сыхлама, колхоз харпăрлăхне лайăх пăхса упрама, тракторсемпе машинăсене тирпейлĕ тытма, лашасене аван, лайăх пăхса усрама, хамăр государствăн рабочисемпе хресченсен государствин заданийĕсене пурне те пурнăçласа пыма пулаççĕ.

Устав пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк пулнине кăтартса парса, Сталин юлташ колхозник-ударниксен Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш съезчĕн комиссийĕнче çапла каланă:

«Эпир сирĕнпе пĕрле законсем çыратпăр. Устав—вăл аслă закон, ялта çĕнĕ общество тумалли тĕп закон».

Кулленхи ĕçре артель Уставĕ çине таянса, ун тăрăх ĕçлесе пырса, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе колхозсем ялхуçалăхне татах та малалла чечеклентерес ĕçе пурнăçа кĕртеççĕ, сутçанталăка урăхлатса çĕнетмелли сталинла плана ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ.

Ялхуçалăх артелĕн Сталинла Уставне пурнăçласа, партипе Совет государстви куллен пулăшнипе пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхăн икĕ çулĕнче колхозсем çĕнĕ хăватпа малалла аталанса пычĕç 1952 çулта тĕштырăсен пĕтĕм тухăçлăхĕ 8 миллиард пăт пулчĕ. Çапла вара тĕштырă ыйтăвне яланлăхах татса панă. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те Тăван çĕршыв пысăк çитĕнÿсем турĕ.

Пирĕн Чăваш республикинчи колхозсем те организаципе хуçалăх енĕпе малалла тĕрекленсе пыраççĕ. Вăйлă тырпул туса илекен, йышлă та тухăçлă выльăх чĕрлĕх ĕрчетекен ялхуçалăх артелĕсен хисепĕ çулсерен ÿсет.

«Ялхуçалăхне юсаса малалла аталантарас задачăсене пурнăçа кĕртсе пырса, — терĕ Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съезĕнче тунă докладра, — пирĕн парти, совет тата ялхуçалăх органĕсем вăрçă хыççăнхи çулсенче колхозсене, МТС-сене тата совхозсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатрĕç. Анчах çак ĕçре çаплах йăнăшсемпе çитменлĕхсем пур-ха».

Çав йăнăшсемпе çитменлĕхсенчен пĕри вăл çакă пулать: колхоз пурлăхне салатса пĕтернине тата ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснине кăтартакан фактсем халĕ те пур-ха.

— Парти, совет тата ялхуçалăх органĕсен хăшпĕр работникĕсем, — тесе кăтартса парать Г. М. Маленков юлташ, —колхозсен обществăллă хуçалăх интересĕсене çирĕп хÿтĕлесе тăрас вырăнне, колхоз пурлăхне хăйсем тустараççĕ. совет законĕсене сĕмсĕррĕн пăсас çул çине, колхозсем тĕлĕшпе иртĕхес тата законсăр ĕçсем тăвас çул çине тăраççĕ.

«Колхозсенче ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснисене пĕтермелли мерăсем çинчен» ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1946 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановление пурнăçласа тата ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснисене пĕтерсе, Чăваш республикинчи партипе совет органĕсем юлашки вăхăтра чылай ĕçсем туса ирттерчĕç 1952 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1953 çулхи январĕн 25-мĕшĕ тĕлне колхозсенчен укçасăр илсе кайнă тĕрлĕ выльăха вĕсене 162 пуç, 661 пуç кайăк-кĕшĕк, темиçе çĕр центнер тĕштырă, çĕрулми, çавăн пекех тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем те чылай каялла тавăрса панă. Йÿнĕ хакпа илсе кайнă пурлăхсене те колхозсем нумай каялла илнĕ Колхоз производствипе çыхăнса тăман ĕçсемшĕн тăкакланă 20.663 ĕçкунне йышăнмалла мар тунă.

Ялхуçалăх артелĕн Уставне сĕмсĕррĕн пăснăшăн 1952 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕпе 1953 çулхи январĕн 25-мĕшĕ хушшинче 358 çынна ответ тыттармалла тунă. Устава пăснисене пĕтерессишĕн çителĕксĕр кĕрешнĕшĕн, сăмахран, Пăрачкав районĕнчи ялхуçалăх пайĕн заведующине Захарова, Вăрмар районĕнчи ялхуçалăх пайĕн заведующине Сапаркина ĕçрен кăларнă.

Анчах та Устава пăснисене пĕтерес, Устава çирĕп пурнăçласа пырас ĕçре пурпĕрех йăнăшсемпе çитменлĕхсем нумай-ха. Законсăр туртса илнĕ вуншар гектар çĕре, тĕрĕс мар салатса пĕтернĕ укçана колхозсене çĕршер пин тенкĕ тавăрса паманни те çавăн çинчен калать.

Пирĕн республикăри колхозсенче транспорт инвентарĕпе ут таврашĕсене колхозниксен килĕсенче тытас киревсĕр практика пур. Çав йăнăша тÿрлетес енĕпе хăшпĕр ĕçсем тунă ĕнтĕ. Апла пулин те çав çитменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе Калинино, Хĕрлĕ Чутай, Муркаш, Первомайски, Сĕнтĕр тата хăшпĕр районсенчи парти, совет, ялхуçалăх органĕсем татăклă мерăсем йышăнмаççĕ.

Ялхуçалăх артелĕн Уставне çирĕп пурнăçласа пырассишĕн Ишлей районĕнче пачах çителĕксĕр кĕрешеççĕ. Акă, «Знамя» колхоза илĕпĕр. Артель председателĕ Польков обществăллă пурлăхпа çак таранччен хăй пурлăхĕ пекех хуçаланнă. 1951 çулхи март уйăхĕнчен пуçласа 1952 çулхи декабрь уйăхĕччен колхоз пурлăхне 10.700 тенкĕлĕх хăй кĕсйине чикнĕ. Вăл хушнипе тĕрлĕ уполномоченнăйсене колхоз шучĕпе укçасăр-мĕнсĕр апатлантарнă, ĕçкĕ-çикĕ тума тĕлли-паллисĕр продуктсем расходланă Председатель айăпĕпе колхоза 36 пин тенкĕ ытла сиен кÿнĕ.

Илсе кăтартнă пек тĕслĕхсем ытти чылай колхозсенче те пур Районта колхозри ĕçсене туса пымалли демократиллĕ йĕркесене, ĕçкунĕсем çырса парас йĕркесене хытă пăсаççĕ, законсăр туртса илнĕ пурлăхсене колхозсене тавăрса пама кирлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

КПСС Ишлей райкомĕ, райисполком тата районти ялхуçалăх пайĕ колхоз пурнăçĕн тĕп законне—Устава пăсакансене хирĕç сивĕччĕн кĕрешмеççĕ.

Республикăри ытти районсенче те ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснисене пĕтерме пур кирлĕ ĕçсене туса ирттермен. Çакна текех чăтса тăма çук «Çавăн пек колхоза хирĕçле, государствăна хирĕçле ĕçсем пурте колхоз хресченĕсене пысăк сиен кÿреççĕ.—тесе каларĕ Г. М Маленков юлташ партин XIX-мĕш съезĕнче,—колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла çирĕплетсе пыма чăрмантараççĕ. партипе Совет государствин авторитетне хавшатаççĕ. Ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснисене татăклăнах пĕтермелле, колхоз пурлăхне салатса айăпа кĕнĕ çынсене, колхоз стройĕн тăшманĕсене вырăнне хурса, социализмлă государство законĕсен пĕтĕм хаярлăхĕпе айăпламалла».

Колхозсен пĕрлештернĕ çĕрĕсене тата пурлăхне салатнине, ĕçкунĕсене тĕрĕс мар тăкакланине, колхозри ĕçсене туса пымалли демократиллĕ йĕркесене пăснине хирĕç партипе совет органĕсен татăклăн кĕрешмелле, ку ĕçе колхозниксен анлă массине хутшăнтармалла.

Артельте харпăрхăйĕн интересĕсене обществăллă интерессемпе тĕрĕс çыхăнтарса пырас сталинла принцип ялхуçалăх артелĕн Уставĕнче тĕп вырăнта тăрать Халĕ çакă принципа пĕтĕмпех партин XIX-мĕш съезчĕ ялхуçалăхĕ умне лартнă тĕп задачăна пурнăçлама пăхăнтармалла.

◆

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе ССР Союзĕн Министрĕсен Советĕнчен

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ 1953 çулхи февралĕн 13-мĕшĕнче, нумай вăхăт хушши йывăр чирленĕ хыççăн Коммунистсен партийĕпе Совет государствин паллă деятелĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн членĕ Лев Захарович **МЕХЛИС** юлташ вилни çинчен чĕререн хурланса пĕлтерессĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕЧĔ.

ССР СОЮЗĔН МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитетĕнче

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ çапла йышăннă:

1. Л. З. Мехлиса пытарассине организацилеме Правительство комиссийĕ тăвас: комиссие çак юлташсем кĕреççĕ: М. А. Суслов (председатель), А. Ф. Горкин, Ф. Ф. Кузнецов, М. Т. Помазнев тата М. А. Ясков.

2. Л. З. Мехлиса Хĕрлĕ Площадьре Кремль стени патĕнче пытарас.

ТЕЛЕГРАММА

Китай Халăх Республикин Центральнăй Халăх Правительствин Председательне

МАО ЦЗЭ-ДУН юлташа

Пекин

Совет Союзĕпе Китай пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси, союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен договор туса алă пуснăранпа виçĕ çул тултарнă май, Председатель юлташ, эпĕ чун-чĕререн саламланине тата мир ĕçĕн интересĕсемшĕн, халăхсен хăрушсăрлăхĕшĕн Китай Халăх Республикипе Совет Союзĕ хушшинчи союза тата пĕр-пĕринпе килĕшсе ĕçлесе пурăнассине малалла тĕреклетсе пыма ырă суннине йышăнăр.

И. СТАЛИН.

ТЕЛЕГРАММА

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Министрсен Совечĕн Председательне

И. В. СТАЛИН юлташа

Китай Халăх Республикипе Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси, союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен договор туса алă пуснăранпа виçĕ çул тултарнă май, эпĕ, Китай халăхĕпе Китай Халăх Правительстви ячĕпе тата хам ятпа, аслă совет халăхне, Совет Правительствине тата Сире хăвăра чун-чĕререн тав тăватăп тата хĕрÿллĕ салам яратăп.

Виçĕ çул хушшинче икĕ аслă союзник,— Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи çывăх туслăх тата пĕр-пĕринпе килĕшсе ĕçлесе пурăнасси хытă çирĕпленчĕ тата аталанчĕ. Совет Правительствипе совет халăхĕ çĕнĕ Китая чăн-чăн ырă кăмăлпа пулăшса пыни Китай экономикине юсассине тата аталантарассине хăвăртлатрĕ кăна мар, çавăн пекех Китайăн государство строительствин пĕрремĕш пилĕк çуллăх планне анлăн пурнăçа кĕртнĕ çĕрте питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрĕ.

Империализм çĕнĕрен агресси тăвас тесе вăрттăн усал ĕçсем тунине хирĕç пыракан кĕрешÿре тата Инçет Хĕвелтухăçĕпе пĕтĕм тĕнчери мире хÿтĕлес ĕçре икĕ çĕршыв хушшинчи— Китайпа СССР хушшинчи никам аркатайми аслă туслăх кунтан-кун çирĕпленсе тата аталанса пытăр.

Китай Халăх Республикин Центральнăй Халăх Правительствин Председателĕ МАО ЦЗЭ-ДУН.

ТЕЛЕГРАММА

Китай Халăх Республикин Государство Администраци Совечĕн Премьерне тата Ют çĕршыв ĕçĕсен Министрне

ЧЖОУ ЭНЬ-ЛАЙ юлташа

Пекин

Совет Союзĕпе Китай пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен договор туса алă пуснăранпа виçĕ çул тултарнă май, эпĕ Сире чун-чĕререн саламланине тата пĕтĕм тĕнчери мир интересĕсемшĕн пирĕн çĕршывсенчи халăхсем хушшинчи туслăха тата пĕр-пĕринпе килĕшсе ĕçлесе пурăнассине малалла тĕреклетсе пыма ырă суннине йышăнма ыйтатăп.

А. ВЫШИНСКИЙ.

ТЕЛЕГРАММА

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Министрне

А. Я. ВЫШИНСКИЙ юлташа

Китай Халăх Республикипе Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси, союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен договор туса алă пуснăранпа виçĕ çул тултарнă май. Сире, Министр юлташ, эпĕ чун-чĕререн саламланине йышăнма ыйтатăп.

Китайпа СССР хушшинчи хăватлă союз Инçет Хĕвелтухăçĕпе пĕтĕм тĕнчери мирпе хăрушсăрлăха сыхласа хăварас ĕçре никам çĕнтерейми çирĕп шанăç пулса тăрать. Мана çак аслă союз малалла тĕрекленсе пытăр тесе ырă сунма ирĕк парăр

Китай Халăх Республикин Центральнăй Халăх Правительствин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ ЧЖОУ ЭНЬ-ЛАЙ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕнче

Çак кунсенче Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн ларăвĕ пулчĕ. Ларăва З. А. Андреева юлташ председатель пулса ертсе пычĕ.

Президиум ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавне Çĕмĕрле хулинче тата Етĕрне районĕнче мĕнле хатĕрленни çинчен, ĕçсыннисен заявленийĕсемпе жалобисене пăхса тухас ĕç Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕнче мĕнле пулса пыни çинчен тата ытти ыйтусене сÿтсе явнă.

Çĕмĕрле хула Совечĕн исполкомĕ суйлав кампанине çителĕксĕр ертсе пырать, суйлавçăсем списокĕсем çинче хăйсем çинчен çырнине тĕрĕслес ĕçе япăх организацилене, хăшпĕр суйлав участокĕсенче час-часах дежурнăйсем пулмаççĕ. Суйлав кампанийĕ пуçланнăранпа хуларан 500 çынна яхăн урăх çĕре кайнă, анчах 40 çын пирки вĕсем хуларан кайни çинчен списоксем çинче паллă туман Суйлавçăсен списокĕсенче 70 суйлавçăна вĕсем хула Советне депутат суйлама хăш округра сасăлама тивĕçлине. 19[illegible] суйлавçăнне вĕсем район Советне депутат суйлама хăш округра сасăлама тивĕçлине кăтартман. Списоксем çине суйлава хутшăнма çул çитмен çамрăксене, суйлпа суйлав прависĕр хăварнисене тата ăсран тухнă çынсене кĕртнĕ Хула Совечĕн исполкомĕ списоксем çинче тĕрĕс мар çырнисене тÿрлетме ыйтса çырнă 106 заявление 15 кун хушшинче те пăхса тухман, суйлав участокĕсенче кабинăсем тăвас ĕçе вăраха тăсать

Етĕрне районĕнчи чылай ял Совечĕсемпе хула Советĕнче суйлавçăсен списокне тĕплĕн çырса хатĕрлемен. Палтай ял Советĕнче списокри йĕркеллĕ номерсене лартнă чухне пăтраштарса пĕтернĕ. Хăшпĕр суйлав участокĕсенче дежурнăйсем пулмаççĕ. Палтай, Чурпай тата Мăн Йĕкĕт суйлав участокĕсенче кабинăсем тата сĕтелсем йĕркелемен, суйлав участокĕсем вырнаçнă çуртсене ăшăтма вутă хатĕрлемен, краççын лампиçем çук.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Çĕмĕрле хула Совечĕн исполкомĕпе Етĕрне райсовечĕн исполкомне çÿлте асăннă çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме хушрĕ Суйлавçăсен списокĕсене 2—3 кун хушшинче тĕрĕслесе пĕтерсе, вĕсенчи йăнăшсене тÿрлетмелле. Участоксенчи суйлав комиссийĕсене пĕтĕмпех тĕрĕсленĕ тата йăнăшсене тÿрлетсе çитернĕ списоксем памалла Исполкомсен хăйсен ларăвĕсенче суйлав кунĕнчи ĕçсене мĕнле йĕркелесси çинчен сÿтсе явмалла та ку енĕпе практикăллă мероприятисене палăртмалла Унта суйлавçăсем сасăлас ĕç мĕнле пулса пыни çинчен сведенисем тăратас тата сасăлании результачĕсем çинчен çырнă протоколсене тăратас ĕçе мĕнле йĕркелемеллине кăтартса памалла.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсен хăйсен членĕсем хушшинче обязанноçсене чалтанах палăртмалла Комиссисен ĕçне лайăх организацилени суйлавçăсем сасăлассине лайăх ирттерме май патăр. Кашни суйлавçă участока пырсанах, кăмран бюллетень илмеллине пĕлтĕр

Суйлав участокĕсем вырнаçнă çуртсенче çирĕп йĕрке пулмалла, суйлав бюллетенĕсене тата ытти япаласене лайăх сыхласа усрамалла.

Çитес 4—5 кун хушшинче суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе пур ĕçсене те туса çитермелле. Февралĕн 19-мĕшĕччен суйлавçăсем сасăламалли пÿлĕмсенче кабинăсем туса çитермелле, сĕтелсем вырнаçтарса лартмалла, суйлав ешĕкĕсем хатĕр пулмалла Кабинăсене лайăх тăвас пулать. Вĕсене лайăх тунн кашни суйлавçăна вăрттăн сасăламалли правăна пурнăçлама май патăр.

Суйлав списокĕсенче кашни суйлавçă хăш округри кандидатшăн сасăламаллине тĕрĕс палăртнине тепĕр хут тĕрĕслесе тухса, йăнăшсене тÿрлетмелле. Хуларан е ялтан каякан кашни суйлавçă «Сасăлама право паракан удостоверени» илсе кайтăр.

* * *

Ĕçсыннисен заявленийĕсемпе жалобисене пăхса тухас ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе явса Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ район, хула, ял, поселок Совечĕсен исполкомĕсене çак ĕçе лайăхлатма хушрĕ. Çырусемпе жалобăсене исполком пайĕсен, учрежденисемпе организацисен руководителĕсен хăйсен тата çийĕнчех пăхса тухас пулать. Исполкомсен çак ĕç мĕнле тăни çинчен учрежденисемпе организацисен руководителĕсен отчечĕсене итлемелле. ку ĕçе мĕнле туса пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла Заявленисемпе, жалобăсемпе пыракансене исполкомсен председателĕсем тата пайсен заведующийĕсем хăш кунсенче тата хăш сехетре йышăнмаллине кăтартнă йĕрке тумалла. Çав йĕркене çирĕп пурнăçласа пымалла.

Теориллĕ конференци

Февралĕн 11—13-мĕшĕсенче Шупашкарта, Советсен çурчĕн залĕнче, Чăваш государство педагогика институчĕпе Чăвашсен чĕлхепе литература тата истори тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем тата И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕ тăрăх теориллĕ конференци ирттерчĕç. Конференцире аслă шкулсемпе вăтам шкулсенче ĕçлекен преподавательсем, инженерсемпе техниксем, пропагандистсем, лекторсем, партипе совет работникĕсем пулчĕç.

Конференцие КПСС Чăваш обкомĕн секретарĕ С. М. Ислюков юлташ кĕске сăмах каласа уçрĕ.

Вăл партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕн историллĕ пĕлтерĕшĕ çинчен, çавна май Чăваш республикинчи наука, литература, искусство работникĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен каларĕ.

Конференци участникĕсем çакăн пек докладсем итлесе сÿтсе яврĕç:

1. И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă произведенийĕ — марксизм-ленинизм теорине пуянлатакан питĕ пысăк ĕç. (Докладчик филологи наукисен кандидачĕ Г. Г. Германов доцент).
2. И В Сталин юлташ ССР Союзĕнче социализмран коммунизма куçмалли малтанхи тĕп условисем çинчен. (Докладчик—педагогика институчĕн аслă преподавателĕ М. Г. Григорьев).
3. И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă произведенийĕ тата всеобщи истори ыйтăвĕсем. (Докладчик — истори наукисен кандидачĕ Г. И. Чавка).
4. И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă произведенийĕ тата СССР истори ыйтăвĕсем (Докладчик — истори наукисен кандидачĕ Н. Г. Буркин доцент).
5. И. В Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă произведенийĕ тата Чăваш АССР историйĕн ыйтăвĕсем. (Докладчик—истори наукисен кандидачĕ П. Г. Григорьев доцент).

Докладсене сÿтсе явас ĕçе истори наукисен кандидачĕ Э. Л. Нитабург, истори наукисен кандидачĕ И. Е. Петров, Чăвашсен чĕлхепе литература тата истори тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн ученăй секретарĕ В. Л. Кузьмин, Мускаври Ломоносов ячĕпе тăракан государство университечĕн аспиранчĕ В. Н. Любимов, Чăваш педагогика институчĕн аслă преподавателĕ Т. Г. Григорьев тата Чăвашсен чĕлхепе литература тата истори тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн директорĕ, истори наукисен кандидачĕ Т. Г. Гусев юлташсем хутшăнчĕç.

Конференци участникĕсем пысăк çĕкленÿпе халăхсен аслă çулпуçĕ тата учителĕ И. В. Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕç.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарас умĕн

КИЕВ. Украина столицинчи ĕçсыннисем Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарнине анлăн паллă тума хатĕрленеççĕ.

Çар, авиаци тата флот ĕçне пулăшакан ирĕклĕ обществăн активисчĕсем предприятисемпе учрежденисенче тата шкулсенче лекцисем вуласа параççĕ. «В. И Ленинпа И. В. Сталин—Совет государствин Хĕçпăшаллă Вăйĕсене туса хуракансем тата руководителĕсем», «Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем Аслă Отечественнăй вăрçăра тунă пĕтĕм тĕнче историйĕнче палăрса тăракан çĕнтерÿ», «Тăван çĕршыва сыхласси—СССР гражданинĕн таса тивĕçĕ» темăсемпе вуланă лекцисене ĕçсыннисем интересленсе итленĕ.

Облаçри хуласемпе ялсенче ĕçсыннисем Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе тĕл пулаççĕ. Совет Çарĕсем фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçнă историллĕ вырăнсене кайса кураççĕ.

Праçник ячĕпе пăшалпа тĕл пемелли тата йĕлтĕрпе чупмалли ăмăртусем ирттереççĕ.

ПРЖЕВАЛЬСК (Киргиз ССР-ĕ). Иссык-Куль облаçĕнчи колхозсемпе совхозсенче тата предприятисенче агитаторсем Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарни çинчен калаçусем ирттереççĕ. Инçетри вырăнсенче кĕтÿ кĕтсе пурăнакан колхозниксем патне Досааф область комитечĕн докладчик-активисчĕсем кайнă.

Пржевальск хулинче тата облаçри хăшпĕр районсенче чаплă праçник ячĕпе йĕлтĕрçĕсен массăллă ăмăртăвĕсене ирттернĕ Досааф пуçламăш организацийĕсем Иссык-Куль кÿлли тавра эстафета ирттерме хатĕрленеççĕ. (ТАСС).

Февралӗн 22-мӗшӗ—вырӑнти Советсене суйламалли кун

* * *

Сергей Васильевич
ВАСИЛЬЕВ,—
Хусан чугун ҫулӗн 17-мӗш дистанци бригадирӗ, 101-мӗш округ тӑрӑх Ӗҫсынни депутачӗсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама регистрациленӗ кандидат.

Колхоз ӗҫӗн организаторӗ

Комсомольски районӗнчи пӗрлешсе пысӑкланнӑ «Дружба» колхоз членӗсем 1951 ҫулта Алиуллов юлташа колхоз председательне суйлаҫҫӗ. Вара вӑл хӑйӗн пӗтӗм вӑйне халиччен юлса пынӑ колхоза тӗреклетес ӗҫе парать. Пӗрлештернӗ колхоз хуҫалӑхӗ хӑвӑрт ӳссе пыма тытӑнать. Икӗ ҫул хушшинче пӗр пин пуҫ чӑх-чӗп вырнаҫмалӑх вите, ӗне вити, 40 лаша валли вите, 200 сысна валли вите, чӑх-чӗп фермипе сурӑх ферминче ӗҫлекенсене пурӑнма ҫурт, гараж, сушилка, ҫиларманӗ туса лартаҫҫӗ, тырӑ хумалли 12 кӗлете юсаҫҫӗ, урӑх ҫӗре куҫарса лартаҫҫӗ. Халӗ колхозра тимӗрҫӗ лаҫҫи тӑваҫҫӗ.

Колхоз ялхуҫалӑх машинисем тӗлӗшӗнчен те пуянланса пырать. Иртнӗ икӗ ҫул хушшинче пӗр автомашина, 4 молотилка, мотор тата ытти ялхуҫалӑх машинисем чылай туяннӑ. Машинӑсемпе усӑ курассине лайӑхлатнипе тата агротехникӑллӑ ӗҫсене анлӑн пурнӑҫласа пынипе колхозра тырӑ тухӑҫлӑхӗ хӑвӑрт ӳссе пырать, ҫакӑ вара колхозниксене ӗҫкунӗсем тӑрӑх тырӑ ытларах валеҫме май парать. 1949 ҫулхипе танлаштарсан, колхозра ӗҫкунӗ тӑрӑх тырӑ валеҫсе парасси 1950 ҫулта виҫӗ хута яхӑн, 1951 ҫулта виҫӗ хут ытла ӳснӗ. Колхозра ӗҫ дисциплини ҫирӗпленнӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем пурте колхоз производствинче тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсен ӗҫлес хастарлӑхӗ пысӑк. Вӗсем вӑйлӑ тырпул туса илме, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана ирттерсе тултарма, выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхӗпе ӗратлӑхне пӗрмаях лайӑхлатса пыма тимлӗ тӑрӑшаҫҫӗ. Иртнӗ ҫул колхоз пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илчӗ, государствӑна тырӑ срокчен парса татрӗ.

1952 ҫулта колхоз выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана пур енӗпе те тултарчӗ. Колхоз 1952 ҫулта кашни ӗнерен 1951 ҫулхинчен 671 литр ытларах сӗт суса илчӗ.

Партин XIX-мӗш съезчӗ ялхуҫалӑхӗ умне кӑларса тӑратнӑ задачӑсене пурнӑҫлассишӗн колхоз членӗсем мӗнпур вӑя хурса ӗҫлеҫҫӗ. Колхозра хӗллехи агротехника ӗҫӗсене пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Ҫуракине хатӗрленес ӗҫ анлӑ сарӑлнӑ. 250 гектар ҫинче юр тытса хӑварнӑ, уй-хире пилӗк пин лав тислӗк кӑларнӑ, вӑрлӑх фончӗсене тунӑ, вӑрлӑхсене тасатса, кондицие ҫитерсе хунӑ. Колхоз тимӗрҫисем ялхуҫалӑх машинисене суйлав кунӗччен юсаса ҫитерессишӗн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Колхозра техникӑллӑ культурӑсен бригади тунӑ. Иртнӗ ҫулта бригада пысӑк тухӑҫлӑ кантӑр туса илчӗ, колхоз государствӑна планран ирттерсе 1.224 килограмм сӳс тата пӗр тонна кантӑр вӑрри пачӗ. Сӳспе кантӑр вӑрринчен 28 пин тенкӗ ытла тупӑш илнӗ. Хальхи вӑхӑтра бригада членӗсем кӑҫал тата пысӑкрах тухӑҫлӑ сӳс-кантӑр туса илессишӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем Алиуллов юлташа хисеплеҫҫӗ, унӑн ӗҫне пысӑка хурса хаклаҫҫӗ. Хӑйсен суйлав умӗнхи пухӑвӗнче вӗсем, район Советне депутата суйлама кандидат тӑратас ыйтӑва хускатсан, чи малтан Сенат Алиуллович Алиуллов ятне аса илчӗҫ, ӑна кандидата тӑратма йышӑнчӗҫ.

Февралӗн 22-мӗшӗнче Эльпуҫ округӗнчи суйлавҫӑсем, пурте пӗр ҫын пек пулса, пултаруллӑ колхоз председательӗшӗн—Сенат Алиуллович Алиуллов юлташшӑн сасӑлӗҫ.

Н. КВАСОВ.
Л. ТАЛЛЕРОВ.

Вера Петровна
КРАСНОВА,—
«Красный мебельщик» промысла артелӗнчи станочница, 77-мӗш округ тӑрӑх Ӗҫсынни депутачӗсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама регистрациленӗ кандидат.

Клубра

Кун каҫ енне сулӑнчӗ. Часах аслӑ ял урамӗсенче электричество хунарӗсем ялкӑшма пуҫларӗҫ. Колхозниксен килӗсемпе обществӑллӑ ҫуртсенче Ильич лампочкисем ҫуталса кайрӗҫ те, каҫхи Вӑрманкас сӑн-сӑпачӗ йӑлтах улшӑнчӗ. Ял каҫхи хула пек курӑнать.

Вӑрманкасри пӗр пысӑк та илемлӗ ҫуртӑн чӳречисем ҫуталчӗҫ. Клуб умне ҫырса ҫапнӑ афиша паян ҫамрӑк суйлавҫӑсен каҫӗ пуласси ҫинчен пӗлтерет.

Халлӗхе клубра никамах та ҫук-ха. Клуб заведующийӗ Кошкин юлташ ҫамрӑксене кӗтсе илме хатӗрленет. Ҫак каҫа ирттерме эрне ытла хатӗрленнӗ. Доклад кам тӑвассине те, художествӑллӑ пултаруллӑх кружокӗсен программисене те палӑртнӑ.

Клубра суйлав материалӗсене кӑтартакан витрина йӗркеленӗ. Вӗсемпе колхозри агитаторсем кӑна мар, колхозниксем те яланах усӑ кураҫҫӗ. Унтах, тепӗр витрина ҫине, ҫамрӑк суйлавҫӑсем валли кирлӗ кӗнекесем вырнаҫтарнӑ. Партин XIX-мӗш съезчӗн материалӗсенчен хатӗрленӗ витринӑна ҫӗнӗ литературӑпа пуянлатнӑ.

Колхозлӑ ял урамӗнче часах юрӑ-кӗвӗ, хут купӑс сасси илтӗнме пуҫларӗ. Ушкӑн-ушкӑн ҫамрӑксем, ватӑ суйлавҫӑсем те, клубалла утаҫҫӗ.

Сакӑр сехет тӗлне клуба суйлавҫӑсем чылаях пухӑнчӗҫ. Ҫамрӑк суйлавҫӑсемпе пӗрле ватӑ колхозниксем те нумай. Вӗсем кашниех витринӑсем ҫинчи кӗнекесене интересленсе пӑхаҫҫӗ, хӑшпӗрисем вулама ҫӗнӗ кӗнекесем илеҫҫӗ.

Суйлавҫӑсен каҫне клубри активист А. Рядов юлташ уҫрӗ.

— «Совет влаҫӗ ҫамрӑксене мӗн пачӗ» темӑпа клуб заведующийӗ Кошкин юлташ доклад туса парать,— пӗлтерчӗ вӑл.

Клубра шӑп. Кошкин юлташ суйлавҫӑсене Совет влаҫӗ панӑ правасем ҫинчен пурне те ӑнланмалла калать. Ҫав хушӑрах докладчик ялти ӗҫсем ҫинчен те калать.

— Эпӗ ҫамрӑк суйлавҫӑсене, ҫавӑн пекех ытти суйлавҫӑсене те, февралӗн 22-мӗшӗнче суйлава активлӑн хутшӑнса, коммунистсемпе партире тӑманнисен сталинла блокӗн кандидачӗсемшӗн сасӑлама чӗнетӗп,— тесе вӗҫлерӗ Кошкин юлташ.

Доклад хыҫҫӑн нумай ыйтусем пулчӗҫ. Ҫамрӑк суйлавҫӑ Р. Нарышкина юлташ сӑмах илчӗ.

— Эпӗ кӑҫал пирвайхи хут суйлава хутшӑнатӑп,— терӗ вӑл сцена ҫине тухсан.— Ҫак кун ӗмӗрлӗхе асӑмра юлӗ. Февралӗн 22-мӗшне ӗҫри ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илме хамӑн пӗтӗм вӑя хуратӑп.

Ҫамрӑк суйлавҫӑсем пӗрин хыҫҫӑн тепри тухса калаҫҫӗ. Вӗсем ҫамрӑксене телейлӗ пурнӑҫ туса панӑшӑн партипе правительствӑна тав тураҫҫӗ.

— Партипе правительство ҫамрӑксемшӗн куллен тӑрӑшаҫҫӗ,— терӗ Р. Петрова юлташ.— Пирӗншӗн пур ҫӗрте те ҫул уҫӑ: ӗҫле, вӗрен, савӑн, пирӗн пурнӑҫ телейлӗ те хаваслӑ. Суйлава хутшӑнни ман пурнӑҫри чи телейлӗ кунсенчен пӗри пулӗ.

Ҫамрӑксем ватӑ колхозниксене чӗререн хисеплеҫҫӗ. Вӗсем 60 ҫулхи И. Степанова чӗнсе илчӗҫ те, ӗлӗкхи пурнӑҫ ҫинчен каласа пама ыйтрӗҫ.

— Эпӗ Октябрь революцийӗченхи Вӑрманкаса питӗ лайӑх астӑватӑп,— терӗ И. Степанов юлташ.— Ӗлӗкхине аса илсен чӗре ыратать. Пирӗн ялта ҫурри ытла хура пӳртре пурӑнатчӗҫ. Улӑм витнӗ ҫуртсем кӗҫ-вӗҫ тӳнсе каяс пек ларатчӗҫ, вӗсем ҫине пӑхма та хӑрушӑччӗ. Пирӗн ял ҫӗрӗн сӗткенӗ пӗтнӗччӗ. Ӑҫтан сӗткенӗ пултӑр унта? Вак анасем ҫине тислӗк тӑкман. Тырпул тухӑҫӗ питӗ пӗчӗк пулнӑ. Ял ҫыннисем ҫурри ытла ҫулталӑкӗпех выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурӑнатчӗҫ. Куланай питех те пысӑкчӗ, вӑхӑтра тӳлемесен хурӑн хулли те час-часах лекетчӗ...

Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче Вӑрманкас сӑн-сӑпачӗ тӗпренех улшӑнса ҫӗнелчӗ. Ӗлӗкхи хура пӳртсем вырӑнне, ҫӗнӗ ҫуртсем ӳсе-ӳсе ларчӗҫ. Кашни колхозник килӗнчех Ильич лампочкисем ҫутатаҫҫӗ, килӗренех радио калаҫать. Халӗ Вӑрманкасра клуб, фельдшер пункчӗ, ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул пур. Колхозниксем ҫулленех вӑйлӑ тырпул туса илеҫҫӗ, выльӑх-чӗрлӗх йышӗ те ҫуллен ӳссе пырать.

Доклад хыҫҫӑн художествӑллӑ пултаруллӑх кружокӗсем концерт пачӗҫ. Хор кружокӗ, темиҫе ҫул каялла йӗркеленӗскер, колхозниксене тӑтӑшах концертсем парать.

Ҫамрӑк суйлавҫӑсем концерта юратса итлерӗҫ. Уйрӑммӑнах Сталинла премии лауреачӗ, чӑваш композиторӗ Ф. Лукин ҫырнӑ «Пире Сталин ырлӑх пачӗ», Туликов композиторӑн «Мы за мир», Сталин ҫинчен хунӑ юрӑсене пур те чӗререн кӑмӑлласа итлерӗҫ.

Ҫамрӑк суйлавҫӑсене А. Петрова, М. Борисова тата Г. Артемьева колхозницӑсем юрлани питех те кӑмӑла кайрӗ.

Вӑрманкас ҫамрӑкӗсем ӗҫре те, вӑййӑра та маттур. Акӑ сцена ҫине ҫамрӑк хӗр М. Борисова тухрӗ. Н. Сергеев хӑйӗн баянне хаваслӑн тӑсса ярать те, чуна ҫӗклентерекен кӗвӗ янрама пуҫлать. М. Борисова ӑста ташлама пуҫлать.

— Ӗҫре мӗнле маттур, клубра та ҫавӑн пекех,— мухтаҫҫӗ ӑна ватӑ колхозниксем.

Ф. Маркова колхозницӑ та М. Борисовӑран кая юлмасть. Вӑл грузинсен ташшине питӗ ӑста ташласа пачӗ.

Телейлӗ пирӗн Совет ҫӗршывӗн ҫамрӑкӗсем. Вӗсем, Сталинла Конституци панӑ правӑсемпе туллин усӑ курса, коммунизм патне шанчӑклӑн утаҫҫӗ. Вӑрманкасри ҫамрӑк суйлавҫӑсем вырӑнти Советсен суйлав кунне ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илеҫҫӗ.

К. КОЧЕТОВ.
Вӑрнар районӗ.

Уй-хир бригадин бригадирӗ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. «Байсубино» колхоз членӗсем ӗҫсынни депутачӗсен район Советне депутата суйлама Мария Степановна Степанова юлташа кандидата тӑратрӗҫ.

Степанова юлташ 1924 ҫулта, Красноармейски районӗнчи Турхан Упи ялӗнче ҫуралса ӳснӗ.

1941 ҫулта, пӗррехинче, Степанова юлташа колхоз правленине чӗннӗ. Ун чухне правленинче колхоз председателӗ 60 ҫултан иртнӗ Александр Владимирович анчах пулнӑ.

— Арҫынсем фронтра кирлӗ, колхоз правленийӗ сире, Маруся, фронта кайнӑ бригадир вырӑнне ӗҫ парасшӑн,— тенӗ колхоз правлени председателӗ.

— Хирӗҫме кӑмӑлӑм ҫук, аслӑ Сталин июлӗн 3-мӗшӗнче радио тӑрӑх мӗнпур совет ҫыннисене чӗнсе калани асӑмра. Вӑл Совет Ҫарне мӗнпур вӑя хурса пулӑшма чӗнчӗ. Ҫӗнтерӳ пирӗн енче пулать,— терӗ. Эпӗ ҫӗнтерӳшӗн хамӑн пурнӑҫа та пама хатӗр,— тенӗ ун чухне 17 ҫулхи хӗр Мария Степанова.

Аслӑ вӑрҫӑ ҫулӗсенче ҫамрӑк хӗре—Степанова юлташа бригадӑна ертсе пыма ҫӑмӑлах пулман: Вӑйпитти арҫынсем фронта кайнӑ. Колхозри мӗнпур ӗҫсене стариксен, хӗрарӑмсен, ачасен тумалла пулнӑ. Ӗҫлеме йывӑр пулнӑ пулсан та, бригадир та, бригада членӗсем те йывӑрлӑхран хӑраса тӑман.

Степанова юлташ ертсе пыракан бригада вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче те хастарлӑ ӗҫлет. Бригада ҫулсеренех тырпул туса илмелли плана тултарать, тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерсе пырать.

Мария Степановна юлташӗсемпе час-часах мӗнле майпа вӑйлӑ тырпул ӳстересси ҫинчен калаҫать.

Вырӑнти Советсен иртнӗ суйлавӗнче М. С. Степанова юлташа Турхан Упи суйлав округӗ тӑрӑх район Советне депутата суйланӑ. 1951 ҫулхи февралӗн 18-мӗшӗнче М. С. Степанова юлташа Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйланӑ. Халӗ колхозниксем Степанова юлташа тепӗр хут район Советне депутата суйлама кандидата тӑратрӗҫ.

И. АФАНАСЬЕВ.

ЛИНОТИПИСТ-ИНСТРУКТОР

Тӑван ҫӗршывӑн мухтавлӑ инженерӗсем тунӑ ытарайми илемлӗ машина. Пӗрремӗш хут куракан ҫын темиҫе тӗрлӗ ӗҫсем тӑвакан ҫак «ӗҫчен» машинӑран сахал мар тӗлӗнет. Питӗ кӑткӑс, этем аллипе тума май ҫук ӗҫсене тӑвать вӑл—линотип текен машина.

Линотиппа тӗрӗс те пӗлсе усӑ курасси—ҫӑмӑл ӗҫ мар. Машинӑн пиншер пайне аван пӗлсе тӑрас пулать. Ҫитменнине тата пирӗн линотипистсем хушшинче сахал опытлӑ юлташсем те пур. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ инструкторӑн пӗлтерӗшӗ пысӑк.

Халӗ линотипист-инструктор пулса ӗҫлекен Петр Иванович Иванов Шупашкарти 1-мӗш номерлӗ типографине ӗҫлеме килнӗренпе чылай вӑхӑт иртрӗ. Вӑл пирӗн туслӑ ҫемьере ӗҫлесе ӳснине эпир питӗ лайӑх пӗлетпӗр.

Шупашкар районӗнчи Чӑрӑшкасси ялӗнче ҫуралнӑскер, вӑл пӗрремӗш класранпах лайӑх вӗреннӗ. Ҫичӗ ҫул вӗреннӗ хыҫҫӑн, типографие ӗҫлеме килчӗ. Линотипист ӗҫне тӑрӑшса вӗренчӗ, кӗске вӑхӑтрах линотипист пулса тӑчӗ. Хӑйӗн пӗлӗвне ӳстерес тӗлӗшпе лӑпланмарӗ, производство техникине канма пӗлмесӗр вӗренчӗ, политикӑллӑ пӗлӗвне те тӑтӑшах ӳстерсе пычӗ.

Петр Иванович халӗ саккӑрмӗш ҫул ӗнтӗ линотипист-инструктор пулса ӗҫлет. Эпир, цехри рабочисем, ӑста та ывӑнма пӗлмен инструкторӑн пулӑшӑвне куллен аван куратпӑр. Инструктор Тӑван ҫӗршыв шанса панӑ хаклӑ машинӑсене юсавлӑ тытать, рабочисене типтерлӗ пулма вӗрентет.

Пултаруллӑ производственник обществӑллӑ ӗҫе активлӑ хутшӑнать. ВЛКСМ комитечӗн членӗ пулнӑ май, вӑл ҫамрӑксен социализмлӑ ӑмӑртӑвне йӗркелес ӗҫре хӑйӗн пуҫарулӑхне лайӑх кӑтартса пачӗ. Петр Иванович Иванов—профсоюз завкомӗн членӗ.

Петр Иванович вӗрентнӗ наборщиксем производство планне ирттерсе тултараҫҫӗ. Ҫамрӑк линотипистка Е. Старова, М. Ложкина тата ытти юлташсен сӑнӗсем—яланах типографири хисеп хӑми ҫинче.

Пирӗн коллектив П. И. Иванов юлташа Шупашкар хула Советне депутата суйлама кандидата тӑратрӗ.

Нумаях пулмасть пирӗн кандидат Шупашкар хула Советне суйламалли 69-мӗш суйлав округӗнчи суйлавҫӑсемпе тӗл пулчӗ. Суйлавҫӑсем Петр Иванович Ивановӑн кандидатурине ырласа йышӑнчӗҫ. Петр Иванович хӑй те суйлавҫӑсем умӗнче сӑмах тухса каларӗ.

— Эпӗ суйлавҫӑсем ман ҫине хуракан шанӑҫа тӳрре кӑларассишӗн пӗтӗм вӑйхалӑпа тӑрӑшӑп,—терӗ кандидат хӑйӗн сӑмахӗнче.

Тӑван ҫӗршывӑн шанчӑклӑ ывӑлӗ, комсомолец Петр Иванович Иванов хӑйӗн ҫирӗп сӑмахне пурнӑҫа кӗртессе шансах тӑратпӑр, ытти суйлавҫӑсене уншӑн сасӑлама чӗнетпӗр.

О. ИВАНОВ, линотипист.
В. ОСИПОВ, верстальщик.

Тава тивӗҫлӗ учительница

Патша саманинче пысӑк йывӑрлӑхсем тӳсме тивнӗ пулин те, Раиса Александровна Раськина юлташ Чӗмпӗрти учительсем хатӗрлекен чӑваш шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ, учительница ятне илме тивӗҫлӗ пулнӑ.

Раиса Александровна учительница пулса 38 ҫул хушши ӗҫлет. Халӑха ҫутта кӑларас енӗпе 38 ҫул хушши ӗҫленӗ ватӑ учительницӑн пурнӑҫӗпе ӗҫри паха опычӗ ҫинчен, паллах ӗнтӗ, нумай ҫырма пулать.

Р. А. Раськина юлташ хӑй халӑха ҫутта кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлесе туяннӑ паха опыта ҫамрӑк учительсем хушшинче сарать. Вӑл учительсене усӑллӑ канашсем нумай парать.

Ывӑнма пӗлмен учительница нумай ачасене вӗрентсе ӳстернӗ. Раиса Александровна вӗрентсе кӑларнӑ ачасенчен нумайӑшӗ учительсем, инженерсем, техниксем, ялхуҫалӑх специалисчӗсем, медицина работникӗсем пулса ӗҫлеҫҫӗ.

Ватӑ учительница ӗҫне партипе правительство тивӗҫлипе хакланӑ. Ӑна Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ тата Ленин орденӗ парса наградӑланӑ. 1950 ҫулта Р. А. Раськина юлташа Чӑваш АССР шкулӗсен тава тивӗҫлӗ учителӗ ятне панӑ.

Ватӑ учительница — активлӑ общественница. Вӑл колхоз членӗсене коммунизмӑн аслӑ стройкисем ҫинчен тата партин XIX-мӗш съезчӗ ялхуҫалӑхӗ умне кӑларса тӑратнӑ задачӑсем ҫинчен ӑнлантарса парать.

Суйлав умӗнхи пухура «Большевик» колхоз членӗсем Раиса Александровна Раськина юлташа Чкаловски район Советне депутата суйлама кандидата тӑратрӗҫ. Вӑл халӑх шанӑҫне тӳрре кӑларӗ. Эпир суйлав кунӗнче — февралӗн 22-мӗшӗнче, пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ пулса, хамӑр сассӑмӑра уншӑн паратпӑр.

Чкаловски районӗнчи «Большевик»
колхозри суйлавҫӑсем:
Н. СТЕКЛОВ, И. ТАКМАКОВ,
В. САФЬЯНОВ.

Плана ирттерсе тултарнӑ

ЙЕПРЕҪ. Суйлав умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, райпотребсоюз иртнӗ уйӑхра тавар ҫаврӑнӑш планне 105,2 процент тултарчӗ.

Суту-илӳ ӗҫӗнче уйрӑммӑнах Хурамал, Туҫа ялповӗсем малта пыраҫҫӗ. Вӗсем тавар ҫаврӑнӑш планне 104—105 процент тултарчӗҫ.

Райпотребсоюз коллективӗ февраль уйӑхӗнчи плана вырӑнти Советсен суйлав кунӗ тӗлне тултарассишӗн ӑмӑртса ӗҫлет.

Г. РИКМАС.

Пропагандистсемпе агитаторсене пулӑшма

Халӑх пурнӑҫне тӑтӑшах лайӑхлатасси тата культурӑллӑ шайне ӳстересси—социализмлӑ общество законӗ

Ленин—Сталин партийӗ ертсе пынипе совет халӑхӗ социализмлӑ строя аталантарса ҫирӗплетес ӗҫре, ӗҫсынни массисен пурнӑҫне лайӑхлатас тата вӗсен культурӑллӑ шайне ӳстерес тӗлӗшпе калама ҫук пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ. Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗ ҫакна пӗтӗм тӗнчене кӑтартса пачӗ. Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мӗш съездӗнче тунӑ докладра ҫапла каларӗ: хальхи вӑхӑтра тӗнчери экономикӑллӑ лару-тӑрӑвӑн пӗтӗмӗшле аталанӑвӗнче икӗ ҫул палӑрса тӑрать. Пӗр ҫулӗ вӑл—Совет Союзӗнче тата халӑх демократи ҫӗршывӗсенче мирлӗ экономика пӗр чарӑнмасӑр ҫӗкленсе пыракан ҫул, вӑл экономика кризиссене пӗлмест, вӑл обществӑн материальнӑй тата культурӑллӑ ыйтӑвӗсене туллин тивӗҫтерес енӗпе аталанса пырать. Тепӗр ҫулӗ вӑл—капитализм экономики ҫулӗ: вӑл экономика капитализмӑн ытларах та ытларах тарӑнланса пыракан кризисӗн хӗскӗчӗнче тапаҫланать. Ку вӑл капитализмлӑ экономика общество интересӗсемшӗн мар, капиталистсене ытларах услам памалла тӑвас тӗллевпе кӑна аталаннинчен килет.

Партин XIX-мӗш съезчӗ пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑх план тӗлӗшпе директивӑсем ҫирӗплетрӗ. Ҫав плана пурнӑҫлани ССР Союзӗн мирлӗ экономикине малалла вӑйлатма, совет халӑхӗн пурнӑҫне лайӑхлатма, культурӑллӑ шайне ӳстерме май парать. Ӗҫсыннисен пурнӑҫне тӑтӑшах лайӑхлатса пырасси пӗтӗм халӑх хуҫалӑхне вӑйлатнипе тачӑ ҫыхӑнса тӑрать. Ку вӑл урӑхла пулма та пултараймасть, мӗншӗн тесен социализмлӑ производство аталанӑвӗн тӗллевӗ совет ҫыннисен ӳсе пыракан ыйтӑвӗсене тивӗҫтересси пулса тӑрать. Совет ҫыннине ырлӑх кӳресси, совет халӑхне чечеклентерсе пырасси пирӗн партишӗн аслӑ закон пулса тӑрать.

I.

Сталин юлташ хӑйӗн «ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ классикӑллӑ произведенийӗнче ҫапла кӑтартса пачӗ: «...социализмлӑ производствӑна ҫӳлте тӑракан техника никӗсӗ ҫинче вӗҫӗмсӗр ӳстерсе тата лайӑхлатса пырса, пӗтӗм обществӑн пӗрмаях ӳсе пыракан материальнӑй тата культурӑллӑ ыйтӑвӗсене чи туллин тивӗҫтерсе пырасси социализмӑн экономикӑллӑ тӗп законӗ пулать». («ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем». Госполитиздат, 1952, 40 стр.).

Ҫак объективлӑ экономикӑллӑ закон ҫине таянса тата ӑна тӗплӗн пӗлсе тӑрса, Коммунистсен партийӗпе Совет государстви пирӗн Тӑван ҫӗршыва малалла вӑйлатмалли ҫулпа илсе пыраҫҫӗ. Социализмлӑ государствӑпа пирӗн парти хӑйсен мӗнпур ӗҫӗсене ӗҫсыннисен ӳсе пыракан ыйтӑвӗсене, совет ҫыннисен материальнӑй тата культурӑллӑ ыйтӑвӗсене ытларах тивӗҫтерес тӗллевпе туса пыраҫҫӗ.

Совет халӑхӗн пурнӑҫӗ лайӑхланса пынине наци тупӑшӗ ӳсни тӗплӗн кӑтартса парать. 1940—1951 ҫулсем хушшинчи тапхӑрта ССР Союзӗн наци тупӑшӗ 83 процент ӳснӗ. 1952 ҫулта, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, наци тупӑшӗ 11 процент ӳснӗ. Капитализмлӑ ҫӗршывсенче наци тупӑшӗн ҫурри ытла эксплуататорла классен аллине каять пулсан, Совет Союзӗнче вара наци тупӑшӗпе мӗнпур ӗҫсыннисем усӑ кураҫҫӗ.

ССР Союзӗнче наци тупӑшӗн тӑватӑ пайӗнчен виҫӗ пайне ӗҫсыннисем хӑйсен материальнӑй тата культурӑллӑ ыйтӑвӗсене тивӗҫтерме илеҫҫӗ, тупӑшӑн ытти пайӗ социализмлӑ производствӑна анлӑлатма, государствӑн пӗтӗмӗшле ыйтӑвӗсене тата обществӑн ытти ӗҫӗсене тивӗҫтерме каять.

Ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑхра социализмлӑ производствӑна аталантарни, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерни наци тупӑшне тата чылай нумайлатма, халӑхӑн материальнӑй пурнӑҫне ытларах лайӑхлатма май парать. Ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑхра ССР Союзӗн наци тупӑшӗ 60 процентран кая мар ӳсмелле.

Капитализмлӑ ҫӗршывсенче ӗҫсыннисен тарӗпе юнне юхтарса тӑвакан наци тупӑшӗн пысӑк пайӗ капиталистсен кӗсйине каять. США-ра, сӑмахран, наци пуянлӑхӗн 79,9 процентӗ—капиталистсен пысӑк мар ушкӑнӗн аллинче, нумай миллионлӑ рабочисемпе служащисене — 4,7 проценчӗ кӑна тивет.

Капитализмлӑ ҫӗршывсенче наци тупӑшӗнчен васкасах хӗҫпӑшалланма каякан пайӗ ӳснӗҫемӗн ӳссе пырать. Сӑмахран, США-ра 1953 ҫулта бюджетӑн 73 процентне вӑрҫа хатӗрленес ӗҫе яма палӑртнӑ. Ҫав хушӑрах пурӑнмалли ҫуртсем тӑвас, социальнӑй обеспеченипе сывлӑха сыхлас ӗҫсене малтан та питӗ сахал укҫа хывнӑ пулсан,—халӗ США-ра вӑл ӗҫсене тума укҫа расходласси чаксах пырать. Ун вырӑнне..., тӗрмесем тытса тӑма каякан расход нумайланса пырать. Ҫавӑн пек ӗнтӗ этеме курайман, историре пурпӗрех пӗтмелли капитализмӑн законӗ.

Совет Союзӗнче государство социальнӑй страховани йӗркипе пособи пама, санаторисемпе кану ҫурчӗсене, ача учрежденийӗсене тӳлевсӗр тата льготӑллӑ условисемпе путевкӑсем пама, нумай ачаллӑ тата пӗччен ача амӑшӗсене укҫа тӳлеме, пӗр тӳлевсӗр медицина пулӑшӑвӗ пама, тӳлевсӗр вӗрентме тата квалификаци ӳстерме, вӗренекенсене стипенди пама, рабочисемпе служащисене отпуск вӑхӑтӗнче ӗҫ укҫи тӳлеме укҫа-тенкӗ расходласси ӳссе пырать. Хуласемпе ялсенчи ӗҫсыннисем ҫавӑн пек тӳлевсемпе ҫӑмӑллӑхсем 1940 ҫулта 40,8 миллиард тенкӗлӗх, 1951 ҫулта—125 миллиард тенкӗлӗх, 1952 ҫулта вара 129 миллиард тенке яхӑн илнӗ.

Пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхра рабочисемпе служащисен социальнӑй страхованийӗ валли уйӑракан укҫа-тенкӗ, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 30 процента яхӑн ӳсмелле.

Совет Союзӗнче рабочисемпе служащисен реальнӑй ӗҫ укҫи, колхозниксем укҫан илекен тупӑш ӳссе пырать. Рабочисемпе служащисен ӗҫ укҫи, хресченсен укҫан илекен тата натуральнӑй тупӑшӗ ӳснипе пула, куллен кирлӗ таварсен хакне йӳнетнипе тата государство тӗрлӗрен тӳлевсем тӳленӗ май,—рабочисемпе служащисен реальнӑй тупӑшӗ (ӗҫлекен пӗр ҫын ҫине куҫарса шутласан) 1951 ҫулта, 1940 ҫулпа танлаштарсан, 57 процента яхӑн ытларах пулнӑ; ҫав хушӑрах хресченсен реальнӑй тупӑшӗ те, ӗҫлекен пӗр ҫын ҫине куҫарса шутласан, 60 процента яхӑн ӳснӗ.

Пирӗн ҫӗршывра рабочисемпе хресченсен тупӑшӗ вӗҫӗмсӗр ӳссе пырать. Сӑмахран, Косогорскри металлурги заводӗнчи В. П. Рыбаков рабочи 1950 ҫулхи октябрь уйӑхӗнчен пуҫласа 1951 ҫулхи июнь уйӑхне ҫитиччен кашни уйӑхрах вӑтам шутпа 1.713-шер тенкӗ ӗҫлесе илнӗ. 1950 ҫулхи декабрь уйӑхӗнче вӑл 2.024 тенкӗ ӗҫлесе илнӗ, унсӑр пуҫне нумай ҫул хушши ӗҫленӗшӗн ӑна 2.284 тенкӗ тӳленӗ.

Промышленноҫӑн тӗп отраслӗсенче ӗҫлекен рабочисен укҫан илекен тупӑшӗ чылай ӳснӗ. Донбасра ӗҫлекен шахтер Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ, СССР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ Иван Валигура хӑйӗн ӗҫ укҫи ҫинчен акӑ мӗн ҫырать:

«Эпӗ ҫирӗм ҫул ытла шахтӑра, ҫӗр айӗнче, ӗҫлетӗп. Анчах пирӗн шахтерсен ӗҫ укҫи хальхи пек нихҫан та пысӑк пулман. Эпӗ Валигура забойщик, уйӑхсерен икӗ, виҫӗ норма тата ытларах та тултаратӑп, кашни уйӑхра тӑватӑ, пилӗк тата ултӑ пин тенкӗ те ӗҫлесе илетӗп».

Колхозниксен укҫан илекен тупӑшӗ те чылай ӳснӗ. Мускав облаҫӗнчи Раменски районӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан колхозри Никитин колхозникӑн ҫемйи 1952 ҫулта 1.373 ӗҫкунӗ тунӑ, 10 пин тенкӗ укҫа, 1,5 тонна тырӑ, 18 тоннӑна яхӑн ҫӗрулми тата пахча ҫимӗҫсем илнӗ. Кунсӑр пуҫне, хушса тӳлемелли йӗрке тӑрӑх та нумай тупӑш тивнӗ. Ставрополь крайӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсем ӗҫкунӗ пуҫне 3,5-шер килограмм тырӑ тата 6-шар тенкӗ укҫан илеҫҫӗ. Таджик ССР-ӗнчи «Москва» колхозри колхозниксем кашни ӗҫкунӗ пуҫне тӑватшар килограма яхӑн тырӑ тата 20-шер тенкӗ укҫа илнӗ.

Куллен кирлӗ таварсен хакӗсене тӑтӑшах йӳнетсе пыни рабочисемпе служащисен реальнӑй ӗҫ укҫине ӳстермелли, хресченсен реальнӑй тупӑшне ӳстермелли пысӑк май пулса тӑрать. 1952 ҫулхи апрель уйӑхӗнче апат-ҫимӗҫ тата промышленность таварӗсен государство хакне пиллӗкмӗш хут йӳнетнӗ. Хальхи вӑхӑтра апат-ҫимӗҫ тата промышленность таварӗсен хакӗ, 1947 ҫулхи тӑваттӑмӗш кварталтипе танлаштарсан, вӑтам шутпа икӗ хут йӳнӗрех. Ҫӑкӑр хакӗ вара 1947 ҫул вӗҫӗнче пулнӑ хакӑн 39 проценчӗ чухлӗ кӑна юлнӑ, аш-какай хакӗ—42 процент, усламҫу—37 процент, сахӑр хакӗ—49 процент кӑна юлнӑ, ытти таварсен хакӗ те чылай йӳнелнӗ.

Пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхра куллен кирлӗ таварсен хакӗ малалла йӳнелсе пымалла. Таварсен ваккӑн сутмалли хакӗсене йӳнетнине шута илсен, ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑхра рабочисемпе служащисен реальнӑй ӗҫ укҫи 35 процентран кая мар, колхозниксен укҫан илекен тата натуральнӑй тупӑшӗсем (укҫа ҫине куҫарса шутласан) 40 процентран кая мар ӳсмелле.

Совет Союзӗ халӑхӑн пурнӑҫне тӑтӑшах лайӑхлатмалли ҫулпа пырать, ҫав хушӑрах капитализмлӑ ҫӗршывсенчи ӗҫсыннисем чухӑнланнӑҫемӗн чухӑнланаҫҫӗ.

Сталин юлташ ҫапла вӗрентет: ҫӗршыври халӑхӑн пысӑкрах пайне эксплуатацилесе, юхӑнтарса тата чухӑнлатса, ытти ҫӗршывсенчи, уйрӑмах та кая юлнӑ ҫӗршывсенчи, халӑхсене чуралантарса тата тӑтӑшах ҫаратса, юлашкинчен, вӑрҫӑсем кӑларса тата халӑх хуҫалӑхне вӑрҫӑ валли ӗҫлеттерсе,—ҫаксемпе пысӑкран та пысӑк услам илес ӗҫре усӑ курса, капиталистла чи пысӑк услам илмелле тӑвасси кучухнехи капитализмӑн экономикӑллӑ тӗп законӗ пулать.

Буржуаллӑ государствӑсен экономикине милитаризациленни капитализмлӑ монополисем ӗҫсыннисен пурнӑҫ условийӗсене начарлатнипе пӗр вӑхӑтра пулса пырать. Капитализмлӑ ҫӗршывсенче ӗҫсыннисен материальнӑй пурнӑҫӗ кунтан-кунах начарланса пырать. Хаксем калама ҫук ӳссе пыраҫҫӗ. Франципе Италири рабочисем хӑйсен ӗҫ укҫипе, вӑрҫӑччен мӗн чухлӗ апат-ҫимӗҫ илме пултарнипе танлаштарса пӑхсан, 1952 ҫулта икӗ хут сахалтарах тавар илеҫҫӗ. США-ра халӗ долларпа вӑрҫӑчченхинчен икӗ хут сахалтарах апат-ҫимӗҫ илме тивет. 1947 ҫулхипе танлаштарсан, США-ра 1952 ҫулта ҫӑкӑр 28 процент хакланнӑ, аш-какай хакӗ 26 процент, сӗт-ҫу хакӗ 18 процент хӑпарнӑ. Англире иртнӗ ҫулта 95 тӗрлӗ апат-ҫимӗҫӗн хакӗ ӳснӗ. Пурнӑҫ хакӗ 1952 ҫулта вӑрҫӑчченхинчен 80 процент ытларах хакланнӑ.

Капитализмлӑ ҫӗршывсенче налогсем ҫултан-ҫулах ӳсеҫҫӗ. 1952 ҫулта США-ра хатӗр япаласем туса кӑларакан промышленноҫри кашни рабочи ҫине, 1939 ҫулхипе танлаштарсан, 33 хут ытларах налог хунӑ.

Ҫак ӗнентерӳллӗ фактсем вилсе пыракан капитализм халӑх массисене питӗ пысӑк хӑрушлӑх патне илсе пынине, вӗсене хӗн-хур, выҫлӑх, вилӗм кӳнине кӑтартса параҫҫӗ.

ЛЕВ ЗАХАРОВИЧ МЕХЛИС

Нумай вӑхӑт хушши тата йывӑр чирлесе пурӑннӑ хыҫҫӑн, 1953 ҫулхи февралӗн 13-мӗшӗнче Коммунистсен партийӗпе Совет государствин паллӑ деятелӗсенчен пӗри, Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн членӗ Лев Захарович **МЕХЛИС** вилнӗ.

Л. З. Мехлис хӑйӗн пӗтӗм пурнӑҫӗнче совет халӑхӗшӗн тӑрӑшса ӗҫленӗ.

Л. З. Мехлис 1889 ҫулта ҫуралнӑ. Вӑл ҫамрӑклах ӗҫпе пурӑнма тытӑннӑ. 1911 ҫулта ӑна ҫара илнӗ; пӗрремӗш тӗнче вӑрҫи вӑхӑтӗнче вӑл артиллери чаҫӗсенче службӑра пулнӑ.

1918 ҫулхи март уйӑхӗнче Л. З. Мехлис Коммунистсен партине кӗнӗ. Граждӑн вӑрҫи ҫулӗсенче вӑл Украинӑра бригада, дивизи тата Сылтӑм ҫыранри ҫарсен ушкӑнӗн ҫар комиссарӗ пулса активлӑ ӗҫленӗ.

Граждӑн вӑрҫи чарӑннӑ хыҫҫӑн парти Л. З. Мехлис юлташа Рабочисемпе Хресченсен Инспекцийӗн Халӑх Комиссариатӗнче ертсе пыракан вырӑнта ӗҫлеме уйӑрса лартать. Кун хыҫҫӑн Л. З. Мехлис пилӗк ҫул хушши партин Центральнӑй Комитечӗн аппаратӗнче ӗҫлет.

1930 ҫулта, Хӗрлӗ Профессура Институтӗнчен вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн, Л. З. Мехлиса «Правда» хаҫат редакцинче ӗҫлеме янӑ. «Правда» хаҫатра ответлӑ вырӑнта ӗҫлесе, вӑл партин тӗп ҫул-йӗрӗшӗн, партипе совет халӑхӗн тӑшманӗсене хирӗҫ активлӑ кӗрешнӗ.

1937 ҫултан пуҫласа 1940 ҫулхи сентябрь уйӑхне ҫитиччен Л. З. Мехлис Хӗрлӗ Ҫарӑн Политикӑллӑ Тӗп Управленине ертсе пырать. Вӑл Хасан кӳлли патӗнче тата Халхин-Гол районӗнче Япони захватчикӗсене ҫӗмӗрсе тӑкас ӗҫе хутшӑннӑ.

1940 ҫулхи сентябрь уйӑхӗнче Л. З. Мехлис юлташа СССР Государство Контролӗн Халӑх Комиссарӗ пулма уйӑрса лартнӑ. Вӑл государство дисциплинине тӗреклетессишӗн, совет законлӑхне пӑснисене хирӗҫ паттӑррӑн кӗрешет.

Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенчех партин Центральнӑй Комитечӗ Л. З. Мехлиса Совет Ҫарӗнче ӗҫлеме ярать. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче вӑл фронтсенче армисен тата фронтсен Ҫар Совечӗсен членӗ пулса ӗҫлет. Совет Правительстви Л. З. Мехлиса генерал-полковник званине панӑ.

Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ чарӑннӑ хыҫҫӑн Л. З. Мехлиса каллех СССР Государство Контроль Министрӗ пулма уйӑрса лартаҫҫӗ.

Юлашки ҫулсенче Л. З. Мехлис йывӑр чирпе чирлесе вырӑнпах выртнӑ.

Л. З. Мехлисӑн халӑх умӗнчи тава тивӗҫлӗ ӗҫне Совет Правительстви пысӑка хурса хакланӑ. Ӑна тӑватӑ хутчен Ленин орденӗпе, икӗ хутчен Хӗрлӗ Ялав орденӗпе, Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе, 1-мӗш степень Кутузов орденӗпе, 1-мӗш степень Суворов орденӗпе тата нумай медальсемпе наградӑланӑ.

Л. З. Мехлис Ленин—Сталин партийӗн шанчӑклӑ ывӑлӗ пулнӑ, вӑл социализмлӑ Тӑван ҫӗршыва парӑнса тӑнӑ. Совет халӑхӗ Лев Захарович Мехлисӑн ырӑ ятне ялан асра тытӗ, мӗншӗн тесен вӑл хӑйӗн пӗтӗм вӑйне коммунизм тӑвас ӗҫе панӑ.

СССР Ҫар Министерствинчен

Ҫар Министерстви партипе государствӑн паллӑ деятелӗ, Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн членӗ, генерал-полковник Лев Захарович **МЕХЛИС** вилни ҫинчен хурланса пӗлтерет.

СССР ҪАР МИНИСТЕРСТВИ.

СССР Государство Контроль Министерствинчен

СССР Государство Контроль Министерствин коллегийӗпе работникӗсен коллективӗ Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн членӗ, генерал-полковник Лев Захарович **МЕХЛИС** вилни ҫинчен чӗререн хурланса пӗлтереҫҫӗ.

СССР ГОСУДАРСТВО КОНТРОЛЬ МИНИСТЕРСТВИ.

КПСС Мускав область комитечӗпе хула комитетӗнчен, ӗҫҫынни депутачӗсен Мускав хула тата область Совечӗсенчен

КПСС Мускав область комитечӗпе хула комитечӗ, ӗҫҫынни депутачӗсен Мускав хула тата область Совечӗсем чӗререн хурланса КПСС Мускав организацийӗн членӗсене тата Мускав хулипе Мускав облаҫӗнчи ӗҫҫыннисене Коммунистсен партийӗпе Совет государствин паллӑ деятелӗ, КПСС Центральнӑй Комитечӗн членӗ Л. З. **МЕХЛИС** вилни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ.

КПСС МУСКАВ ОБЛАСТЬ КОМИТЕЧӖПЕ ХУЛА КОМИТЕЧӖ. ӖҪҪЫННИ ДЕПУТАЧӖСЕН МУСКАВ ХУЛА ТАТА ОБЛАСТЬ СОВЕЧӖСЕМ.

Медицина заключенийӗ

Л. З. Мехлис юлташ чирӗ тата вилӗм сӑлтавӗ ҫинчен

Л. З. Мехлис юлташ 1889 ҫулта ҫуралнӑ, вӑл нумай ҫул хушши гипертони чирӗпе, атеросклерозпа, пуҫ миминчи юн тымарӗсен, чӗрепе аорта юн тымарӗсен атеросклерозӗпе чирлесе пурӑннӑ.

1949 ҫулта унӑн пуҫ мимине юн кайнӑ (инсульт) тата ҫав вӑхӑтрах миокард инфаркчӗ пулнӑ, вара унӑн нумай вӑхӑт хушши вырӑнпах выртмалла килнӗ. 1952 ҫулти октябрьтен пуҫласа, чӗре вӑйсӑрланса пынӑ пирки, сывлӑхӗ тата пушшех начарланнӑ.

Чӗрепе юн тымарӗсем ӗҫлени вӑйсӑрланса пынӑ пирки Л. З. Мехлис юлташ февралӗн 13-мӗшӗнче 1 сехет те 35 минутра вилнӗ.

Ӳтне касса пӑхнӑ чухне ҫакӑ палӑрнӑ: атеросклероз пулнӑ—пуринчен ытла чӗре юн тымарӗсем, аорта тата пуҫ мими юн тымарӗсем чирленӗ, миокард инфаркчӗ хыҫҫӑн пысӑк ҫӗвӗ пулса юлнӑ, сылтӑм енчи лӗпкепе ҫамка тӗлӗнче пуҫ мими тахҫанах ҫемҫелнӗ пулнӑ.

Вилӗм сӑлтавӗ—чӗре ӗҫлеменни.

Кремль лечсанупр начальникӗ **И. И. КУПЕРИН.**
Профессор **П. Е. ЛУКОМСКИЙ.**
Профессор **А. В. РУСАКОВ.**
Доцент **В. Т. БОЕВ.**
Врач **Н. И. КУЗЬМИНА.**

Вӑрлӑх хатӗрлесе ҫитересси—паянхи ӗҫ

Партин XIX-мӗш съезчӗ мӗнпур ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне малалла ӳстерсе пырас задача лартрӗ. Ҫак ответлӑ задачӑна ӑнӑҫлӑ пурнӑҫласси вӑрлӑх пахалӑхӗнчен тата колхозсем хӑйсем валли пирӗн вырӑнта лайӑх пулакан сортлӑ вӑрлӑхсем ҫителӗклӗ хатӗрленинчен нумай килет.

Пирӗн республикӑри хӑшпӗр колхозсем кӑҫалхи ҫураки валли вӑрлӑх ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. Вӑрмар районӗнчи «Дружба» колхозра 229 центнер ҫурхи тулӑ, 500 центнер сӗлӗ вӑрлӑхӗсем хӑйсен пахалӑхӗпе пӗрремӗш класпа, ытти вӑрлӑхсем, ҫав шутрах 8 центнер клевер, 16 центнер люцерна вӑрлӑхӗсем те, акмалли пахалӑхӗ иккӗмӗш класпа хакланаҫҫӗ. Ҫавӑн пек паха вӑрлӑхпа «Дружба» колхоз, паллах, 1953 ҫулта хӑйӗн хуҫалӑхне аталантармалли государство планне иртерсе тултарма та пултарать. Паха вӑрлӑх—вӑл ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне ӳстермелли тӗп услови пулса тӑрать.

Анчах та республикӑри нумай колхозсем вӑрлӑх пахалӑхне лайӑхлатассишӗн ҫителӗклӗ тӑрӑшмаҫҫӗ, ҫакӑнпа ӗнтӗ колхоза та, государствӑна та чылай пысӑк тӑкак кӳреҫҫӗ. 1952 ҫулта уйрӑм колхозсенче вӑрлӑха унӑн шӑтас пахалӑхне тӗрӗслемесӗрех акнӑ. Ҫакӑ тырпул тухӑҫлӑхне чылай чакарчӗ. Сӑмахран, Сӗнтӗр районӗнчи «Заря» колхоз иртнӗ кӗркунне начар шӑтакан ыраш акса хӑварнӑ. Ҫавӑнпа 36 гектар ҫинчи ыраш питӗ сайра шӑтса тухрӗ, ҫав лаптӑка тепӗр хут сухаласа акмалла пулчӗ. Ҫавӑн пек тӗслӗхсем Етӗрне, Первомайски, Шӑмӑршӑ тата ытти районсенчи колхозсенче те пулкаланӑ.

Республикӑри колхозсенче 1953 ҫулхи ҫураки валли вӑрлӑх хатӗрлес, вӑрлӑх фондне хывнӑ тырра акма юрӑхлӑ тӑвас задача кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен вирлӗрех тухса тӑрать. Мӗншӗн тесен вӑрлӑх участокӗсем ҫинчи тырпула вырса пустарассине нумай колхозсем вӑраха ячӗҫ тата авӑн ҫапас ӗҫ те, тӗпрен илсен, ҫанталӑк йӗпе, сивӗ тӑнӑ вӑхӑтра пулса иртрӗ. Ҫапла вара чылай колхозсем вӑрлӑх фондне паха тырӑ уйӑрса хураймарӗҫ, вӑрлӑхлӑх тырра кӗлетсене тасатмасӑр тата типӗтмесӗр хуни те чылай пулчӗ.

Ҫапла пулсан та ялхуҫалӑх работникӗсем, пуринчен ытла МТС-семпе районсенчи ялхуҫалӑх пайӗсем колхозсенче вӑрлӑхлӑх тырра хӑвартрах тасатас, нӳрӗ вӑрлӑхсене типӗтес ӗҫе организацилес тӗлӗшпе ку тарана ҫитсе те кирлӗ пек хусканмаҫҫӗ. Вӑрлӑхлӑх тырӑсен пахалӑхне тӗрӗслекен государство инспекци работникӗсем те колхозсене вӑрлӑхсен пахалӑхне хӑвӑртрах тӗрӗслесе парассишӗн кирлӗ таран тӑрӑшни курӑнмасть.

Ҫураки—инҫетре мар. Вӑрлӑх хатӗрлес тӗлӗшпе япӑх ӗҫленине ниепле те чӑтма май ҫук. Вӑрлӑх фондне хывнӑ тырӑн пахалӑхне агрономсем мӗн чухлӗ иртерех тӗрӗслесе тухаҫҫӗ, колхозсем те вӑрлӑх пахалӑхне лайӑхлатас тӗлӗшпе тивӗҫлӗ ӗҫсене ҫавӑн чухлӗ хӑвӑртрах туса иртерме пултараҫҫӗ.

Ҫак чӑнлӑха Ишлей, Етӗрне, Хӗрлӗ Чутай, Ҫӗмӗрле районӗсенчи агрономсемпе колхозсен председателӗсем ниепле те тавҫӑрса илеймеҫҫӗ. Ҫак районсенчи колхозсенче вӑрлӑхсен пахалӑхне тӗрӗслеме ку тарана ҫитсе те тивӗҫлипе тытӑнман-ха.

Вӑрлӑхсен пахалӑхне тӗрӗслес тӗлӗшпе ӗҫлекен государство инспекцийӗн материалӗсенчен ҫакӑ курӑнать: кӑҫал вӑрлӑхсен пахалӑхӗ уйрӑмах начар, халлӗхе тӗрӗсленӗ вӑрлӑхсенчен ҫурри ытла акма юрӑхсӑр. Советски, Хӗрлӗ Чутай, Пӑрачкав, Сӗнтӗр районӗсенчи колхозсенче тӗрӗсленӗ вӑрлӑхсенчен пурте пекех тасалӑх, шӑтас тата нӳрлӗх тӗлӗшпе кондициллӗ мар. Ҫапла пулсан та районсенчи ялхуҫалӑх пайӗсен заведующийӗсем, МТС директорӗсем тата вӗсен главнӑй агрономӗсем вӑрлӑхсен пахалӑхне лайӑхлатас тӗлӗшпе нимӗнле мерӑсем те йышӑнман. Колхоз председателӗсене илсен, вӗсем вара кӑҫал та иртнӗ ҫулхи йӑнӑшсенех тепӗр хут тӑваси патне пыраҫҫӗ, вӑрлӑхсене тасатас, сортлас тата типӗтес ӗҫе ҫуркуннене хӑвараҫҫӗ. Ҫакӑ ӗнтӗ тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерсе пырас ӗҫре ытла та пысӑк йӑнӑш туни пулать.

Республикӑри чылай колхозсенче вӑрлӑхсене тасатма та, типӗтме те тытӑнман. Акӑ, илер Советски районнех. Кунта нумай колхозсенче тӗштырӑ, техникӑллӑ культура тата нумай ҫул ӳсекен курӑксен вӑрлӑхне акма ҫителӗклӗ уйӑрса хуман. Вӑрлӑх фондне хывнӑ тырӑсенчен те акма юрӑхли пурӗ те пӗр процент кӑна, ыттисем ҫӳплӗ е нӳрӗ пирки акма юрӑхлӑ мар. Чылай вӑрлӑхсем нӳрӗ пулнӑ, асӑрхаман пирки 700 центнер вӑрлӑхӑн шӑтас пахалӑхӗ чакнӑ. Ҫапла пулсан та, Советски районӗнчи ялхуҫалӑх пайӗ нӳрӗ вӑрлӑхсене типӗтес ӗҫе колхозсенче организацилемен.

Нумай вӑрлӑхсем таса мар пирки кондицие лармаҫҫӗ. Лабораторисенче анализ туни кӑна аван кӑтартса парать. Элӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра сортласа тасатнӑ тенӗ тулӑн кашни килограмӗнче ҫумкурӑкӗсен вӑррисем 646 пӗрчӗ. Ҫак районтах «Молния» колхозра 150 центнер ҫурхи тулӑ вӑрлӑхне тасатнӑ тата сортланӑ теҫҫӗ. Анчах ҫав тасатнӑ вӑрлӑхӑн кашни килограмӗнче тӗрлӗрен ҫумкурӑк вӑррисем нормӑран 8 хут нумайрах пулни палӑрнӑ.

Уйрӑм колхозсем вӑрлӑхсене начар складсенче тытса усраҫҫӗ. Шӑмӑршӑ, Сӗнтӗрвӑрри районӗсенчи хӑшпӗр колхозсенче вӑрлӑхсем 1,5—2 сантиметр хулӑнӑш юр айне пулнӑ. Вӑрлӑхлӑх тырра уйрӑм складсене хуман колхозсем те пур. Ҫакӑ вӑл вӑрлӑхлӑх тырра каяш тырӑсемпе хутӑштарма тата хурт-кӑпшанкӑсемпе сиенлеме май парать.

Вӑрлӑх тасатас тата сортласа вӗттисенчен уйӑрас ӗҫе тивӗҫлипе хаклакан колхозсем те сахал-ха. Элӗк районӗнчи Киров ячӗпе, Жданов ячӗпе, Чапаев ячӗпе, Молотов ячӗпе тӑракан колхозсенче триерсем пур пулин те ку таранччен вӑрлӑхсене сортлама тытӑнман. Шӑмӑршӑ районӗнчи «Гвардеец» колхозра триерпа мӗн пурӗ те 40 центнер тулӑ кӑна сортланӑ. Ялхуҫалӑх пайӗсен, МТС-сен агрономӗсен тата вӑрлӑх пахалӑхне тӗрӗслекен государство инспекторӗсен ҫавӑн пек фактсемпе килӗшсе лармалла мар, вӑрлӑхсене тасатас ӗҫ колхозсенче мӗнле пулса пынине тӗрӗслесе тӑмалла, ҫуракине хатӗрленес ӗҫ хӑй тӗллӗн пулса пырасси ҫине шанмалла мар. Советски МТС-ӗн агрономӗ В. Васильева юлташ вӑрлӑхсене тасатас ӗҫе пӗр колхозра та организацилемен.

Юлашки ҫулсенче пирӗн республикӑна тырӑ сортламалли, курӑксем шӗкӗлчемелли машинӑсем чылай илсе килчӗҫ. Вӗсемпе пуринпе те колхозсенче усӑ курмалла. Анчах нумай МТС-сем ҫакна халӗ тумасҫӗ-ха. Сӑмахран, Муркаш МТС-че «ОС-1» маркӑллӑ икӗ машина кӗркуннеренпех «Свобода» тата «Красное Сормово» колхозсенче лараҫҫӗ, вӗсемпе пурӗ те 300 центнер тулӑ вӑрлӑхӗ сортланӑ. Элӗк районӗнчи ҫавӑн пек виҫӗ машинӑран пӗрине те ӗҫе яман. Элӗк МТС-ӗн главнӑй агрономӑн ӗҫне туса пыраканӗ Р. Дубинина юлташ ҫав машинӑсем ӑҫта ларнине те пӗлмест.

Вӑрлӑхсене сортласа тасатас ӗҫе организацилесси—мӗнпур колхозсемпе ялхуҫалӑх органӗсен паян тумалли задачи. Районсенчи ялхуҫалӑх пайӗсен, МТС-сен агрономӗсен тата вӑрлӑх пахалӑхне тӗрӗслекен районсенчи инспекцисен колхозсемпе МТС-сенчи тырӑ тасатмалли тата сортламалли машинӑсемпе туллин усӑ курмалла тӑвас пулать, кашни колхозра вӑрлӑх сортлама тата типӗтме ятарласа ҫынсем уйӑрмалла, ҫапла вара вӗсене вӑрлӑхсене тасатса тата типӗтсе ҫитермесӗр урӑх ӗҫсене турткаламалла мар. Участоксенчи агрономсен тырӑ тасатмалли кашни машинӑна тӗрӗслемелле, кашни уйрӑм культура вӑрлӑхне сортлама унӑн алине кӑтартса памалла, вӑрлӑх участокӗсем ҫине акма сортлӑ вӑрлӑхсенчен шултрараххисене уйӑрса илес ӗҫе организацилемелле.

Нӳрӗ вӑрлӑхсене типӗтес ӗҫе тӗрӗс организацилесен вӗсен шӑтас пахалӑхне ӳстерме пулать. Ҫакӑнпа пӗрлех, Пӑрачкав, Кувакино, Улатӑр, Вӑрмар, Шӑмӑршӑ районӗсенчи колхозсенче пӑрҫа вӑрлӑхне пӑрҫа хурчӗсенчен сыхлас ӗҫ ҫине уйрӑммӑнах тимлӗн пӑхмалла.

А. ФЕДОТОВ,
агроном.

Чӑваш АССР Министрӗсен Советӗнче

Промысла кооперацийӗн артелӗсемпе инвалидсен кооперацийӗн артелӗсем 1952 ҫулхи IV-мӗш кварталта социализмла ӑмӑртса ӗҫленин итогӗсем ҫинчен

Промысла кооперацийӗн артелӗсемпе инвалидсен кооперацийӗн артелӗсем 1952 ҫулхи IV-мӗш кварталта социализмла ӑмӑртса ӗҫленин итогӗсене пӑхса тухса, Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ ҫапла йышӑннӑ:

ВӐРМАН ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИЙӖН АРТЕЛӖСЕМ ЕНӖПЕ

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Чӑвашдревпромсоюза пӑхӑнса тӑракан Шупашкарти Куйбышев ячӗпе тӑракан артеле памалла тунӑ (правлени председателӗ Шляхтин юлташ). Ҫак артель 1952 ҫулхи IV-мӗш кварталта продукци туса кӑлармалли плана пӗтӗмпе 136,7 процент тата ҫирӗплетнӗ ассортимент тӑрӑх тултарнӑ, продукцин хӑйне ларакан хакне 16,1 процент чакарнӑ, ӗҫ тухӑҫлӑхне 9,4 процент ӳстернӗ.

Канашри «1-ое Мая», Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Кайри Шӗнерпуҫӗнчи «Деревообделочник» артель лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

ИНВАЛИДСЕН КООПЕРАЦИЙӖН АРТЕЛӖСЕМ ЕНӖПЕ

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Шупашкарти инвалидсен «Волга» артельне памалла тунӑ (правлени председателӗ Ведин юлташ). Артель 1952 ҫулхи IV-мӗш кварталта продукци туса кӑлармалли плана пӗтӗмпе 123 процент тата ҫирӗплетнӗ ассортимент тӑрӑх тултарнӑ, продукцин хӑйне ларакан хакне 12,4 процент чакарнӑ, тупӑш тумалли плана 124,4 процент тултарнӑ.

Чӑвашпромсовет (председателӗ Маклашкин юлташ) тата Чӑваштарпромсоюз (председателӗ Климов юлташ) 1952 ҫулхи IV-мӗш кварталта социализмлӑ ӑмӑртӑва ҫителӗксӗр ертсе пынӑ, ҫавна пула вӗсене пӑхӑнса тӑракан артельсем социализмлӑ ӑмӑрту условийӗсене пурнӑҫламан. Ҫавна шута илсе, Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне никама та памалла мар тунӑ.

Малта пыракан промартель

КАНАШ. «Дружба» промартель—хулари чи пысӑк артельсенчен пӗри. Вӑл ӗҫҫыннисем валли тӗрлӗрен япаласем туса кӑларать. Артель членӗсем продукци пахалӑхне лайӑхлатассишӗн, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн, чӗртаварпа материал перекетлессишӗн ӑмӑртаҫҫӗ. 1952 ҫулта ӗҫ тухӑҫлӑхӗ 27 процент ӳснӗ. Артель ҫулталӑкри планран иртерсе 3.450 пин тенкӗлӗх продукци туса кӑларчӗ, 1,4 миллион тенкӗ тупӑш турӗ.

Кӑҫал артель пӗлтӗрхинчен продукци 2,2 миллион тенкӗлӗх ытларах туса кӑларма палӑртнӑ. Артель членӗсем пысӑклатнӑ плана срокчен тата иртерсе тултарма, ӗҫҫыннисен ыйтӑвӗсене лайӑх тивӗҫтерме сӑмах панӑ. Вырӑнти Советсен суйлав ячӗпе социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, артель иртнӗ уйӑхри плана 118 процент тултарнӑ.

Артель членӗсем икӗ уйӑхри плана февралӗн 22-мӗшӗ тӗлне тултарассишӗн кӗрешеҫҫӗ.

И. ЖАДЕЦКИЙ.

Строительство материалӗсем хатӗрлемелле

СӖРПУ. Районти колхозсем ҫулсерен обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх валли ҫурт-йӗрсемпе витесем тума палӑртнӑ ӗҫсене пурнӑҫламаҫҫӗ. Иртнӗ ҫулта та строительство ӗҫӗсен планне тултарайман. Ҫакӑ, паллах, колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе чӑрмантарать.

Халӗ строительство валли йывӑҫ материалсем хатӗрлемелли чи лайӑх вӑхӑт. Райсовет исполкомӗ кашни колхоза тенӗ пекех строительство материалӗсем хатӗрлеме вӑрман уйӑрса панӑ. Районӗпе пурӗ 6.450 кубометра яхӑн йывӑҫ касса хатӗрлемелле пулсан, халӗ 1.025 кубометр ҫеҫ касса хатӗрленӗ.

Айӑпӗ кунта пӗтӗмпех колхоз руководителӗсем ҫак ответлӑ ӗҫе хакламаннинче. Акӑ фактсем.

Калинин ячӗпе тӑракан колхозӑн 1952 ҫулта чӑх-чӗп тата пӑру витисем ҫӗнӗрен лартмаллаччӗ. Анчах колхоз правленийӗ строительство валли материалсем вӑхӑтра хатӗрлемен пирки иртнӗ ҫу вӑхӑтӗнче нихӑш витине те туса лартаймарӗ. Ҫавна шута илсе, райсовет исполкомӗ ҫак колхоза кӑҫал 220 кубометр вӑрман касса строительство материалӗсем хатӗрлеме ирӗк пачӗ. Колхоз председателӗ Иванов юлташ колхозниксене вӑрман касма хӑвартрах ярас вырӑнне, ку таранччен ордер илмесӗр тӑрать.

«Правда» колхоз пирки те ҫавнах каламалла. Кунта выльӑх витисем япӑхса кайнӑ, чылайӑшне ҫӗнӗрен тумалла. Строительство материалӗсем ҫителӗксӗр пулнипе колхоз иртнӗ ҫулла тума тытӑннӑ ӗне витине туса пӗтермерӗ.

Жданов ячӗпе тӑракан колхоз вара иртнӗ ҫулта хатӗрленӗ йывӑҫа ҫуллахи вӑхӑтра вырӑна илсе ҫитереймерӗ. Ҫавна пула витесем тӑвас ӗҫ чарӑнса ларнӑ.

Строительство валли материалсем хатӗрлес ӗҫе халех тытӑнмалла. Выльӑх-чӗрлӗх валли ҫурт-йӗрсем тумалли плана кӑҫал кашни колхоз тултарма тивӗҫ.

Х. ЛИСИН.

II.

Совет правительствипе Коммунистсен партийӗ, Сталин юлташ хӑй куллен кирлӗ таварсем туса кӑларассине вӑйлатас ӗҫе калама ҫук пысӑка хурса хаклаҫҫӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче социализмлӑ ялхуҫалӑхне тата промышленноҫӑн халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларакан отраслӗсене юсаса ҫитерес тата малалла аталантарас тӗлӗшпе пысӑк ӳсӗмсем туни Совет государствине государствӑпа кооперацин суту-илӗвне тӑтӑшах вӑйлатса пыма май парать. Колхоз суту-илӗвӗ те хӑвӑрт вӑйланса пырать.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче государствӑпа кооперацин суту-илӗвӗн тавар ҫаврӑнӑшӗ 2,9 хут ӳснӗ, вӑрҫӑччӗнхи шайран чылай иртсе кайнӑ. 1952 ҫулта государствӑпа кооперацин магазинӗсенче ӗҫҫыннисене 1951 ҫулхинчен 10 процент ытларах тавар сутнӑ.

Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗ совет суту-илӗвне малалла лайӑхлатса аталантармалли ҫулсене кӑтартса пачӗ. Задача ҫапла тӑрать: совет суту-илӗвне кӗске вӑхӑтрах тата та вӑйлатса, ҫӳлӗрех шая ҫӗклемелле. Пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе панӑ директивӑсенче государствӑпа кооперацин суту-илӗвне 1950 ҫулхинчен 70 процента яхӑн ӳстерме палӑртнӑ.

Социализмран коммунизма куҫмалли пысӑк условисенчен пӗри, тесе вӗрентет Сталин юлташ, рабочисемпе служащисен пурӑнмалли условийӗсене лайӑхлатни пулса тӑрать. Сталин юлташӑн ҫак кӑтартӑвне асра тытса, Совет правительстви пурӑнмалли ҫуртсем тӑвас ӗҫе лайӑхлатассишӗн тата вӑйлатассишӗн ырми-канми тӑрӑшать. Пурӑнмалли ҫуртсем тӑвассине вӑйлатма ҫултан-ҫул ытларах укҫа хываҫҫӗ, пиншер лайӑх ҫуртсем тӑваҫҫӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче кӑна хуласемпе рабочи поселоксенче 155 миллион тӑваткал метр чухлӗ пурӑнмалли ҫуртсем тунӑ тата ялсенче 3,8 миллион ҫурт лартнӑ.

1952 ҫулта 27 миллион тӑваткал метр чухлӗ пурӑнмалли ҫуртсем тунӑ. Унсӑр пуҫне, ялсенче ҫӗнӗрен 370 пин ҫурт лартнӑ. Сӑмахран, пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн столицинче—Мускавра—1952 ҫулта пурӑнмалли ҫуртсем тӑвас ӗҫӗн калӑпӑшӗ, 1940 ҫулхипе танлаштарсан, икӗ хут ӳснӗ. 1952 ҫулта Мускавра 782 пин тӑваткал метр чухлӗ пурӑнмалли ҫуртсем лартнӑ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче оккупацире пулнӑ районсенче пурӑнмалли ҫуртсем тӑвас ӗҫ ҫине Совет правительстви уйрӑмах тимлӗ пӑхать. Сӑмахран, Сталинграда илер. Герой-хула тӗпренех ишӗлни паллӑ ӗнтӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче Сталинградра 1 миллион та 340 пин тӑваткал метр чухлӗ пурӑнмалли ҫуртсем туса лартнӑ. 1952 ҫулта кӑна Сталинградра 138 пин тӑваткал метр пурӑнмалли ҫуртсем тунӑ, унсӑр пуҫне тата вӑтӑр пин тӑваткал метр чухлӗ пурӑнмалли ҫуртсем хатӗрлесе ҫитернӗ.

Пурӑнмалли ҫуртсем тӑвас ӗҫ ҫав тери анлӑн сарӑлса пыни капитализмлӑ нимӗнле ҫӗршывра та пулман, пулма та пултараймасть. Капитализмлӑ ҫӗршывсенче пурӑнмалли ҫуртсем тӗлӗшпе пысӑк йывӑрлӑхсем пур. Америкӑра 10 миллион ҫемьене пурӑнмалли ҫуртсем ҫитмеҫҫӗ, тепӗр 5 миллион ҫемье шӑтӑк-ҫурӑксемпе шалашсенче шӑнса пурӑнать, виҫӗ миллион ҫемье ытла этеме пурӑнма юрӑхсӑр ҫурт-йӗрсенче пурӑнать. Италире ҫур миллиона яхӑн ҫын шӑтӑк-ҫурӑксемпе хӳтлӗхсенче, виҫӗ миллион ҫын ытла этеме пурӑнма юрӑхсӑр ҫурт-йӗрсенче пурӑнать. Англире вӑрҫӑччен 3 миллион ҫурт ҫитмен, хальхи вӑхӑтра 6 миллион ҫурт ҫитмест.

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗ пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе йышӑннӑ директивӑсенче гражданла строительствӑна малалла аталантарма палӑртнӑ. Иртнӗ пилӗкҫуллӑхрипе танлаштарсан, ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑхра ҫуртсем тума 2 хут ытларах укҫа уйӑрма палӑртнӑ. Хуласемпе рабочи поселоксенче государство строительстви енӗпе кӑна 105 миллион тӑваткал метр чухлӗ пурӑнмалли ҫуртсем тума пӑхнӑ.

Партипе правительство Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисен сывлӑхне сыхлассишӗн ырми-канми тӑрӑшаҫҫӗ. Сывлӑха сыхлас ӗҫ валли государство 1940 ҫулта 11,2 миллиард тенкӗ укҫа расходланӑ пулсан, 1951 ҫулта 26,4 миллиард тенкӗ, 1952 ҫулта вара 27,7 миллиард тенкӗ расходланӑ. Больницӑсемпе диспансерсен, кану ҫурчӗсемпе санаторисен шучӗ ӳссе пырать. 1952 ҫулта медикаментсемпе тӗрлӗрен медицина оборудованийӗ туса кӑларасси питӗ нумай ӳсрӗ. Медицина пулӑшӑвӗ вӑйланнине пула тата ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗ лайӑхланнӑ май юлашки ҫулсенче пирӗн ҫӗршывра ачасем ҫураласси нумайланчӗ, чирлекенсемпе вилекенсен хисепӗ нумай чакрӗ. Юлашки виҫӗ ҫул хушшинче пирӗн ҫӗршывра 9 миллион та 500 пин ҫын хутшӑннӑ.

Капитализмлӑ ҫӗршывсенче пачах урӑхла. Вӗсенче ӗҫҫыннисене медицина пулӑшӑвӗ парасси кӳллен-кун чакса пырать. США-ра, сӑмахран, 40 миллион ҫын нимӗнле медицина пулӑшӑвӗ те илеймест. Ҫӗршыври районсенчен ҫурринче сывлӑх учрежденийӗсем пачах та ҫук. Сывлӑх учрежденийӗсен шучӗ чакса пырать, эмелсен хакӗ ӳсет. Италире 24 миллион ҫын—мӗнпур халӑхран 51 проценчӗ—медицина пулӑшӑвӗ пачах илеймест, Турцире 10,5 миллион ҫын—мӗнпур халӑх шутӗнчен ҫурри ытла туберкулезпа чирлет. Капитализмлӑ ҫӗршывсенче ачасем вилесси калама ҫук хӑвӑрт ӳссе пырать. Сӑмахран, Турцире 1951 ҫулта ҫуралнӑ 800 пин ачаран 400 пин ача вилнӗ.

III.

Социализм культурӑна ӳстерсе чечеклентерчӗ, халӑха пӗлӳлӗхпе наука патне ҫул уҫса пачӗ. Пирӗн ҫӗршывра наука, литературӑпа искусство тата культура енӗпе тунӑ пысӑк ҫитӗнӳсем пӗтӗмпех анлӑ массӑсен тивлечӗ пулса тӑчӗҫ.

—Ӗлӗк,—тенӗ В. И. Ленин 1918 ҫулта Пӗтӗм Российӑри Советсен III-мӗш съездӗнче,—этемлӗхӗн пӗтӗм ӑс-тӑнӗ, унӑн пӗтӗм генийӗ пӗрисене техникӑпа культура мӗн тума пултарнине парас, ыттисенчен вара чи кирлине—ҫутта тухассипе аталанассине туртса илмелле тӑвас тӗлӗшпе ӗҫленӗ. Халӗ вара техникӑра тунӑ тӗлӗнмелле хӑватлӑ ӗҫсем, культурӑра тунӑ пысӑк ӗҫсем пӗтӗм халӑх тивлечӗ пулса тӑраҫҫӗ, малашне ӗнтӗ этем ӑс-тӑнӗпе генийӗ нихҫан та пусмӑрламалли, эксплуатацилемелли хатӗр пулмӗҫ.

Совет халӑхӗн культурӑллӑ шайне ӳстерессишӗн парти пӗтӗм вӑйпа кӗрешет. Социализмран коммунизма куҫмалли малтанхи условисенчен пӗри вӑл общество культура тӗлӗшпе аталанни пулса тӑрать, тесе вӗрентет Сталин юлташ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче ҫав тери пысӑк ӳсӗмсем тунӑ. Ленин—Сталин партийӗ ертсе пынипе, совет халӑхӗн содержани тӗлӗшӗнчен социализмлӑ, форми тӗлӗшӗнчен нациллӗ культури ӳссе чечекленет. Совет государстви халӑха вӗрентес, наукӑна аталантарас, культура строительстине вӑйлатас ӗҫсем валли ҫав тери нумай укҫа расходлать. Халӑха ҫутта кӑларас ӗҫ валли 1940 ҫулта 22,5 миллиард тенкӗ расходланӑ пулсан, 1951 ҫулта вӑл расход 57,3 миллиард тенке ҫитнӗ, урӑхла каласан,—2,5 хут ытла ӳснӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче кӑна 23.500 шкул тунӑ. Хальхи вӑхӑтра ССР Союзӗнче вӗренекенсен шучӗ 57 миллион ҫынна ҫитет е 1940 ҫулхинчен 8 миллиона яхӑн ытларах шутланать.

1952 ҫулта аслӑ шкулсемпе техникумсенче вӗренме ытти ҫулхисенчен чылай нумайрах илнӗ. ССР Союзӗнче аслӑ шкулсенче вӗренекенсен шучӗ, Европӑри капитализмлӑ ҫӗршывсенчи вӗренекенсен шучӗпе танлаштарсан, 1,5 хут ытларах шутланать.

Капитализмлӑ ҫӗршывсенче пуянсем, эксплуататорла классем кӑна культура ҫитӗнӗвӗсемпе усӑ кураҫҫӗ. Чухӑн ҫынсем, ӗҫҫыннисем вӗренме пултараймаҫҫӗ. Америкӑра, Англире, Францире хут пӗлмен ҫынсем паянхи куна та темиҫешер миллион шутланаҫҫӗ. Уйрӑмах колонисенчи тата пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсенчи ӗҫҫыннисен вӗренме май ҫук. Колонисенче пурӑнакансен пысӑк пайӗ пачах хут пӗлмест. Сӑмахран, Суданра тата Британски Сомалинче хут пӗлменнисен йышӗ 99 процента ҫитет, Мадагаскарта, Алжирта, Либерире—90 процент шутланать. Ҫывӑхри Хӗвелтухӑҫри тата Вӑтам Хӗвелтухӑҫри ҫӗршывсенче хут пӗлекенсен шучӗ 15—20 процентран иртмест.

Пирӗн ҫӗршыв халӑха вӗрентес тӗлӗшпе ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑхра тата та пысӑк утӑм тӑвать. Съезд пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе панӑ директивӑсенче палӑртнӑ тӑрӑх, пилӗкҫуллӑх вӗҫӗнче республикӑсен столицисенче, республикӑсене пӑхӑнакан хуласенче, облаҫсемпе крайсен центрӗсенче тата промышленноҫлӑ пысӑк центрсенче ҫичӗ ҫул вӗрентес ӗҫрен пурне те вӑтам пӗлӳ парас (вунӑ ҫул вӗрентес) ӗҫе куҫса ҫитмелле. Ҫитес пилӗкҫуллӑхра ытти хуласемпе ялсенче те пурне те вӑтам пӗлӳ памалла тума условисем хатӗрлесе ҫитерме палӑртнӑ.

Ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑхра вӑтам шкулсенче политехникӑллӑ вӗренӗве йӗркелесе ямалли тата пӗтӗмӗшпех политехникӑллӑ вӗренӳ ҫине куҫмалли ӗҫсене туса ҫитерме палӑртнӑ.

Тӑваттӑмӗш пилӗкҫуллӑхрипе танлаштарсан, хуласемпе ялсенчи шкулсен строительстви 70 процента яхӑн ӳсмелле.

Совет Союзӗнче хуласемпе ялсенче культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсем нумай. Халӗ ҫӗршывра тӗрлӗрен библиотекӑсем 368 пин шутланаҫҫӗ. Ҫулталӑкра кӑларакан кӗнекесен шучӗ 800 миллион экземпляра ҫитнӗ е 1940 ҫулхинчен 1,8 хут ӳснӗ. 1939 ҫултанпа хуласемпе ялсенчи калаҫакан кино кӑтартмалли установкӑсен шучӗ 3 хута яхӑн ӳснӗ.

Пирӗн ҫӗршывра совет литературипе искусствине аталантарас тӗлӗшпе те пысӑк ӳсӗмсем тунӑ. Ҫак ӗҫсенчи талантлӑ деятельсене нумайӑшне ҫулсеренех Сталинла премисем параҫҫӗ.

Анчах та ҫак ӗҫре пирӗн пысӑк ҫитменлӗхсем те пур-ха. Вӗсене партин XIX-мӗш съездӗнче Г. М. Маленков юлташ кӑтартса пачӗ. Литературӑпа искусствӑра вӑтам, шупка, хӑш чухне тата Совет ҫӗршывӗнчи пурнӑҫа пӑсса кӑтартакан, куҫкӗретех халтурӑллӑ произведенисем те ҫаплах нумай тухаҫҫӗ-ха. Ҫав ҫитменлӗхсене пӗтерესси пирӗн задача пулса тӑрать. Пирӗн писательсемпе художниксен, композиторсемпе кинематографи работникӗсен тивӗҫӗ—совет обществин пурнӑҫне тӗплӗнрех вӗренсе, пирӗн халӑха тивӗҫтерекен пысӑк произведенисем ҫырасси пулать.

* * *

Совет ҫыннисем ҫитӗнӳсемпе лӑпланса лармаҫҫӗ. Коммунистсен партийӗ тата Сталин юлташ совет ҫыннисен пурнӑҫне ытларах лайӑхлатас тата вӗсен культурӑллӑ шайне малалла ӳстерес тӗлӗшпе совет халӑхӗ умне ҫӗнӗрен пысӑк задачӑсем кӑларса тӑратаҫҫӗ. Ҫав задачӑсене пурнӑҫа кӗртес ӗҫре ӗҫҫынни депутачӗсен вырӑнти Совечӗсен хӑйсен пысӑк рольне кӑтартмалла. Вӗсем ӗҫҫыннисен культурӑллӑ тата пурнӑҫри куллен ӳссе пыракан ыйтӑвӗсене мӗнпур майсемпе тивӗҫтерсе пыма тивӗҫлӗ.

Пирӗн совет ҫӗршывӗнче кӑна мӗнпур ӗҫҫыннисен материальнӑй пурнӑҫӗпе культурӑллӑ шайне тӑтӑшах тата вӗҫӗ-хӗррисӗр ӳстерсе пыма май пур. Пирӗн пӗтӗм пурнӑҫ, пирӗн пӗтӗм кӗрешӳ тата Коммунистсен партийӗпе Совет правительствин мухтавлӑ ӗҫӗсем пӗр тӗллеве—мӗнпур совет ҫыннисен пурнӑҫне тата пуянрах та телейлӗрех, ҫутӑрах та савӑнӑҫлӑрах тӑвас тӗллеве пӑхӑнса пулса пыраҫҫӗ.

Пиллӗкмӗш пилӗк ҫулӑх план тӗлӗшпе партин XIX-мӗш съезчӗ лартнӑ задачӑсем халӑх интересӗсемпе килӗшсе тӑраҫҫӗ. Ҫав задачӑсем совет ҫыннисене хамӑр Тӑван ҫӗршыв мухтавӗшӗн тӑрӑшса ӗҫлеме хавхалантараҫҫӗ, коммунизм тӑвассишӗн творчествӑллӑ та хастарлӑ ӗҫлеме чӗнеҫҫӗ.

Ф. БЕЛОХВОСТОВ.

Прага хулинче Владимир Ильич Ленин музейне уçнă. Çак музея Чехословакири Коммунистсен партийĕпе правительство тăрăшнипе уçмалла тунă.

Музей Гибернски урамри Халăх çуртĕнче. Ку çуртра РСДРП Пĕтĕм Российăри улттăмĕш историллĕ конференцийĕ пулса иртнĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. И. Ленинăн Прага хулинчи музейĕ.

ЧЕХОСЛОВАКИРИ ТЕЛЕГРАФ АГЕНТСТВИН ФОТОÿКЕРЧĔКĔ.

Китайра ĕçсыннисемшĕн тăрăшни

ШАНХАЙ, февралĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Китайри ĕçсыннисем хăйсен клубĕсемпе тата культура дворецĕсемпе тивĕçлипех мухтанаççĕ. Клубсемпе Культура дворецĕсем культурăллă-массăллă, политикăпа спорт пурнăçĕн центрĕсем пулса тăраççĕ. Вуншар тата çĕршер пин рабочисем тата вĕсен çемйисем кунсерен клубсемпе Культура дворецĕсене çÿреççĕ.

Шанхайри фабрикăсемпе заводсен 800 клуб ытла пур. Унсăр пуçне хулара районти 7 клуб, 2 культура çуртĕ тата пĕр Культура дворецĕ ĕçлет. Çак клубсемпе культура çуртĕсем рабочисем пурăнакан районсенче вырнаçнă.

Шанхайри ĕçсыннисен Культура дворецĕ уйрăммăнах палăрса тăрать. Дворецра вуншар тĕрлĕ кружоксем, сăмахран, кĕпе-тумтир касса çĕлеме вĕрентекен тата изобразительнăй искусствăна вĕрентекен кружоксем ĕçлеççĕ. Дворецра пулса иртекен спектакльсене, выставкăсене, художествăллă пултарулăх кружокĕсене тата вуламалли залсене кунсерен вăтам шутпа 10 пин çын çÿрет. Иртнĕ çулта ку Дворецра 3 миллион çын ытла пулнă.

Дворецра туса иртерекен ĕçсем тата вĕсен пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Кунта пиншер рабочисем вулама тата çырма вĕреннĕ, культурăна хăнăхнă, вĕсем массăллă ĕçĕн агитаторĕсемпе организаторĕсем пулса тăнă.

Çак кунсенче Шанхайра тата 3 Культура Дворецĕ уçаççĕ. Халĕ кунта хĕрÿллĕ ĕç пырать.

КИТАЙ ХАЛĂХ ДОБРОВОЛЕЦĔСЕН КОМАНДОВАНИНЕ ДЕМОКРАТИЛЛĔ КОРЕЯ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИН ОРДЕНĔСЕМПЕ НАГРАДАЛАНА

ПЕКИН, февралĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Корея фронтĕнчен çапла пĕлтерет: февралĕн 8-мĕшĕнче—Корея Халăх çарĕ 5 çул тултарнă кун—Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Аслă Халăх пухăвĕн Президиумĕ Корейăри Китай халăх доброволецĕсен командующине Пын Дэ-хуэй генерала, çавăн пекех командующин заместителĕсене—Дэн Хуа тата Ян Дэ-цзи генералсене тата Гэнь Сы-чжи, Ли Чжи-мин, Се Фак генералсене «Государство ялавĕн» пĕрремĕш степеньлĕ орденĕпе наградăланă.

ХАЛĂХСЕН МИРЕ ХÿТĔЛЕС ТĔЛĔШПЕ ПУЛСА ИРТНĔ КОНГРЕСĔН РЕШЕНИЙĔСЕНЕ ВĔРЕНЕÇÇĔ

СОФИЯ, февралĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири ĕçсыннисем халăхсен мире хÿтĕлес тĕлĕшпе пулса иртнĕ Конгресĕн решенийĕсене хытă интересленсе вĕренеççĕ. Мире хÿтĕлес ыйтупа çĕршывра пур çĕрте те нумай çынлă пухусем пулса иртеççĕ. Пухусенче Конгресс делегачĕсем, мире хÿтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Наци комитечĕн членĕсем докладсем тăваççĕ.

Мире хÿтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Наци комитечĕ София хулинче кун пек пухусемпе калаçусене пурăнмалли çуртсенче, нумай предприятисемпе учрежденисенче иртернĕ. Çĕршыври ытти хуласенче те мире хÿтĕлес тĕлĕшпе пухусем пулнă.

Конгресс решенийĕсене ăнлантарас тĕлĕшпе Болгарири ялсенче пысăк ĕçсем туса иртереççĕ. Пухусенче хресченсем резолюцисем йышăнаççĕ. Вăл резолюцисенче хресченсем мир ĕçне вĕçне çитиччченех сыхласа хăварма хатĕр пулнине палăртаççĕ.

Иранра çĕр чĕтренĕ

ТЕГЕРАН, февралĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Дад» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер çĕр чĕтренине пула Шахруд хулинчен 150 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре вырнаçнă Таруд ятлă ялти çуртсем ишĕлнĕ. Ялта пурăнакан 1.500 çынтан 1.450 çын вилнĕ тата аманнă.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикинче ĕçре чапа тухнă çынсене наградăлани

ПХЕНЬЯН, февралĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС) Корейăри хаçатсем Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Аслă Халăх Пухăвĕн Президиумĕн Указне пичетленĕ. Вăл Указ тăрăх Ким Мен Сик тата Ро Чхан Хи машинистсене, пăравуссене юсакан мастера Чжен Сен Ена, машинист-новаторсене Ан Сон Гука, Чжон До Мена тата рабочи-железнодорожнике Цой Сон Чжуна Ĕç геройĕ ятне, «Çурлапа Мăлатук» ылтăн медаль тата Государство Ялавĕн пĕрремĕш степеньлĕ орденне памалла тунă.

КОРЕЯ ХАЛĂХ ÇАРĔН ЧАÇĔСЕМПЕ СОЕДИНЕНИЙĔСЕНЕ НАГРАДАЛАНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 13-мĕшĕ (ТАСС) Корейăри Центральнăй телеграф агентстви Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Аслă Халăх Пухăвĕн Президиумĕн Указĕсене пĕлтернĕ. Вăл Указ тăрăх Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн чаçĕсемпе соединенийĕсене Китай халăх доброволецĕсемпе пĕрле Америка агрессорĕсене тата Ли Сын Манăн çар соединенийĕсене хирĕç пынă çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн орденсем парса наградăланă.

Халăх çарĕн 15-мĕш дивизине, пехотăн 27-мĕш дивизине, пехотăн 45-мĕш дивизийĕнчи 89-мĕш полка, Главнăй командованийĕн Çыхăну управленийĕ çумĕнчи пĕрремĕш уйрăм полка, 47-мĕш дивизири зенитнăй батальона тата Халăх çарĕн 5-мĕш соединенийĕн сапернăй батальонне Ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăхĕн орденĕ парса наградăланă.

ФРАНЦИРИ ĔÇСЫННИСЕМ ХĂЙСЕН ПРАВИСЕМШĔН КĔРЕШЕÇÇĔ

ПАРИЖ, февралĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС) Ĕç укçине ÿстерессишĕн кĕрешсе, Парижри хула транспортĕнче ĕçлекенсем [illegible] каллех вĕçке вăхăтлăха забастовка [illegible]. «Се суар» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, хуларн 24 маршрутпа çÿрекен автобуссен водителĕсем [illegible],5 сехет хушши забастовка тунă. Парижри метрополитенăн пĕр линийĕ çинчи поезд водителĕсемпе проводниксем 50 минутлăха ĕçлеме чарăннă.

Испанире ачасем шкула çÿреймеççĕ

ПАРИЖ, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Франко власĕсем, Америкăн агрессиллĕ планĕсене пурнăçлас ĕçе активлă хутшăнса тата Испанирен Америка империалисчĕсен çар бази туса хурса, халăха сутта кăларас ĕç валли каякан расходсене ытларах та ытларах чакарса пыраççĕ.

Нумаях пулмасть Швейцарири телеграф агентстви Франко правительствин сутĕç министрĕ Хименес тухса калани çинчен Мадридран панă хыпара пĕлтернĕ. Пĕлтернинчен çакă курăнать: Хименесăн Испанире шкула çÿремелли 4 миллион ачаран 1.400 пин ача шкулта вĕреннине йышăнма тивнĕ.

Çак ачасем вĕсен ашшĕ-амăшĕсен шкулта вĕрентме укçа-тенкĕ çуккишĕн кăна мар, çĕршывра шкулсем çитменнине пула та шкулсенче вĕренеймеççĕ Çĕршывра шкулсем тума пăрахнă. Çакă паллă: Франко правительстви 1952 çулта бюджетран 20 миллиард песетран 12 миллиарчĕпе çар ĕçĕ валли усă курнă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС) Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ февралĕн 13-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕн чаçĕсем тата Китай халăх доброволецĕсем хĕвеланăç фронтăн участокĕсенчен пĕринче Америкăпа Англи интервенчĕсен разведка тăвакан отрячĕсене хирĕç çапăçнă

Самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн пĕр самолетне персе ÿкернĕ, 3 самолетне сиенленĕ.

Америка вăрă-хурахĕсем

ПХЕНЬЯН, февралĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Америка авиацийĕ Пхеньянпа Корейăри ытти хуласемпе ялсем çине тискеррĕн бомбăсем пăрахма тата пулеметсенчен пеме чарăнмасть. Февралĕн 11-мĕшĕнче çĕрле Америка бомбардировщикĕсем Пхеньянăн халăх пурăнакан, кăнтăр енчи районĕ çине, унта нимĕнле çар объекчĕсем çук пулин те, каллех тискеррĕн бомбăсем пăрахнă. Америка летчикĕсем çывăракан хĕрарăмсемпе ачасем çине фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем пăрахнă. Çав каçах Кăнтăр Пхенан провинцийĕнчи Кансо уездĕнчи ялсем çине те бомбăсем пăрахнă.

Америкăн сывлăшри вăрă-хурахĕсем Кăнтăр Пхенан провинцийĕнчи ялсем çине тискеррĕн бомбăсем пăрахнине палăртса, Корейăри Центральнăй телеграф агентстви çапла пĕлтерет: февралĕн 7-мĕшĕнче çĕрле Америкăн «вĕçекен крепоçĕсем» Чунхва уездĕнчи Ванвон вулăсĕнчи ялсенчи хресченсен çурчĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă. Пурăнмалли çуртйĕрсене нумай ишĕлтернĕ, вуншар çынсене вĕлернĕ тата амантнă. Февралĕн 8-мĕшĕнче çĕрле Америка бомбардировщикĕсем Тэдон уездĕнчи Копхен вулăсĕнчи хресченсен çурчĕсемпе землянкисем çине фугаслă тата напалмлă бомбăсем 300 ытла пăрахнă. Çакăн пек тискер бомбардировкăна пула хресченсен çурчĕсемпе землянкисене нумай ишĕлтернĕ, тăлăх ачасен çуртне, выльăх-чĕрлĕх фермине ишĕлтернĕ. Нумай хĕрарăмсемпе ачасем вилнĕ.

Австрири ĕçсыннисем фашизма хирĕç кĕрешсе вилнĕ çынсене хисеплесе асăнаççĕ

ВЕНА, февралĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Австрири ĕçсыннисем Австри пролетариачĕ хеймверовецсене (фашистсен Австрири хĕçпăшаллă çар организацийĕ.—Ред.) хирĕç çапăçнăранпа 19 çул тултарнине паллă тăваççĕ.

1934 çулхи февраль уйăхĕнче хеймверовецсене хирĕç пынă çапăçусенче вилнĕ Австри столицинчи рабочисене асăнса Вена хулинчи масар çинче митинг иртернĕ. Парламент депутачĕ Эрнст Фишер сăмах тухса каланă. Дольфус (Австрин ун чухнехи премьер-министрĕ.—Ред.) сулĕ, тенĕ вăл Австрин никама пăхăнманлăхне пĕтерчĕ, çĕршыва гитлерла Германи оккупацилесси патне илсе пычĕ. Австрие вăрçă блокĕсене кĕртес текен çынсем пирĕн çĕршывра халĕ те пур-ха Ĕлĕк хеймвера ертсе пынă Рааб тата Фигель, сылтăм социалистсен лидерĕпе Гельмерпа тата 1934 çулхи февраль уйăхĕнче рабочи класа сутнă ытти лидерсемпе пĕрле, çĕршыва ют çĕршыв империалисчĕсен аллине параççĕ.

1934 çулхи февраль уйăхĕнче хăйсен пуçĕсене хунă çынсем, тенĕ юлашкинчен Фишер, пире фашизмпа вăрçăн хăрушлăхне хирĕç пыракан кĕрешĕве вăйлатма чĕнеççĕ Пирĕн çĕршывшăн пĕр çул кăна—демократиллĕ майпа аталанмалли, наци никама пăхăнманлăхĕшĕн тата нейтралитетшăн кĕрешмелли çул пур.

Митингра пулнисем фашизма хирĕç кĕрешсе вилнĕ рабочисен вилтăприсем çине чечек çыххисем хунă.

Çакна палăртмалла: Линца хулинчи рабочисене «Шифф» гостиници умĕнче чечек çыххисем хума сылтăм социалистсем чарнă. Ку гостиница патĕнче 19 çул каярах рабочисем хеймверовецсене хирĕç вăйлă çапăçнă. Ĕçсыннисен делегацийĕ гостиница патне чечек çыххисем илсе пынă чухне гостиница хапхи хупă пулнă. Хапхана полицейскисен пысăк отрячĕ хураллană. Делегаци вара чечек кăшăлĕсене хапха патне хунă. Анчах Тури Австрири ландтагăн депутачĕ Гарингер хушнă тăрăх чечек çыххисене кăларса ывăтнă. Хулара пурăнакансем çакăншăн хытă тарăхнă.

Паян ирхине пĕтĕм Австрире, хеймверовецсене хирĕç çапăçса вилнĕ çынсене хисеплесе асăнса, чĕнпур заводсемпе фабрикăсенче 5 минут хушши ĕçлемен.

ДЕМОКРАТИЛЛĔ ГЕРМАНИ РЕСПУБЛИКИНЧЕ САТĂРÇĂСЕМПЕ САБОТАЖНИКСЕМ ТĔЛĔШПЕ ЙЫШĂННА ПРИГОВОР

БЕРЛИН, февралĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Потсдамра сăтăрçăсемпе саботажниксен ушкăнне сут туса пĕтернĕ. Сăтăрçăсемпе саботажниксен ушкăнĕ Англипе Америка империалисчĕсем тата вĕсен Клейн-Махноври агенчĕсем панă заданисене пурнăçланă Айăпланакан Вилли Штейна 10 çуллăха каторга тĕрмине хупмалла тунă. Рихард Фельша, Фриц Розенбаума тата Вальтер Бейера 6 çуллăха каторга тĕрмине хупмалла тунă Ытти айăпланакансене 5 çултан пуçласа 2 çул таран тĕрмене хупма йышăннă

Совет спортсменĕсем Пĕтĕм тĕнчери студентсен Х-мĕш вăййине хутшăнаççĕ

Февралĕн 23-мĕшĕнче Австрире Пĕтĕм тĕнчери студентсен хĕлле иртерекен Х-мĕш вăййисем пуçланаççĕ Çак ăмăртăва Пĕтĕм тĕнчери студентсен Союзĕ иртерет. Унта йĕлтĕрпе чупас енĕпе, йĕлтĕрпе ту-сăртлă вырăнта ярăнас тĕлĕшпе, конькипе чупас тĕлĕшпе, конькипе фигурăсем туса ярăнас тĕлĕшпе тата хоккейла выляс енĕпе ăмăртмалла пулать.

Пĕтĕм тĕнчери студентсен хĕлле иртерекен Х-мĕш вăййисен Организациллĕ комитечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Австри, Франци, Итали, Чехословаки, Польша, Румыни, Финлянди тата ытти çĕршывсенчи спортсменсем çак ăмăртăва хутшăнма кăмăл тунă.

Совет спортсменĕсем çак вăййăсенче конькипе тата йĕлтĕрпе чупас енĕпе, ту-сăртлă вырăнта йĕлтĕрпе ярăнас тата хоккейла выляс тĕлĕшпе ăмăртаççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери шахмат турнирĕнче

БУХАРЕСТ, февралĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 12-мĕшĕнче турнирăн 11-мĕш вăййине иртернĕ Çак вăйăпа ăмăртăвăн иккĕмĕш пайĕ пуçланнă.

Болеславский гроссмейстер (СССР) Бардаран (Норвеги) выляса илнĕ.

Петросянпа (СССР) Шайтар (Чехословаки) хушшинчи, О'Келлипе (Бельги) Толуш (СССР) хушшинчи, Румыни шахматисчĕсем Чоколтяпа Ш. Сабо хушшинчи, çавăн пекех Голомбекпа (Англи) Филипп (Чехословаки) хушшинчи партисем пĕрне-пĕри çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ.

Ытти партисене тепĕр вăхăта хăварнă.

Чехословаки тата Совет Союзĕнчи хоккеистсен юлташла тĕлпулăвĕ

СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ чĕннипе Мускава Чехословакири хоккеистсен сборнăй команди килнĕ.

Февралĕн 13-мĕшĕнче «Динамо» стадионра Чехословакири хоккеистсен сборнăй командипе Мускаври сборнăй командин хушшинче юлташла тĕлпулу иртернĕ

Мускав спортсменĕсем вăйăра 8:2 шутпа çĕнтернĕ.

Мускаври Чехословакири хоккеистсен иккĕмĕш вăййи февралĕн 15-мĕшĕнче пулать. (ТАСС).

XVI-мĕш ĕмĕрти Шупашкар хулин макечĕ

Гаврил Матвеевич Матвеев Элĕк районĕнчи апат-çимĕç комбинатĕнче шофер пулса ĕçлет. Вăл хăй ĕçне юратса тунипе пĕрлех, художествăна питĕ интересленет. Матвеев ку тĕлĕшпе ниçта та вĕренмен пулин те, çуллă сăрсемпе лайăх картинăсем тăвать. Пуринчен ытла вăл тĕрлĕ макетсем тума ăста.

Мускаври Хĕрлĕ площадĕн Матвеев тунă макетне республикăри ĕçсыннисем иртнĕ çулсенче пулса иртнĕ выставкăра курнăччĕ. Çав ĕçшĕн 1950 çулта, Шупашкарта пулса иртнĕ выставкăра, ăна пĕрремĕш преми панă.

Халĕ Матвеев, Чăвашсен чĕлхепе литература тата истори тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн кăтартăвĕ тăрăх, авалхи XVI-мĕш ĕмĕрти Шупашкар хулин макетне туса пĕтернĕ. Çак макета Шупашкарти краеведени музейне вырнаçтарса лартнă. Музейра пулакансем Матвеевăн пултаруллă ĕçне пысăка хурса хаклаççĕ.

Н. АМУРЦЕВ.

ХОР КРУЖОКĔСЕН РУКОВОДИТЕЛĔСЕН СЕМИНАРĔСЕМ

ВЛКСМ обкомĕпе Облпрофсовет тата республикăри халăх творчестви çуртĕ ялсенчи хор кружокĕсен руководителĕсен семинарĕсене иртереççĕ.

Семинарсем иртерме районсене искусство работникĕсемпе музыка училищин студенчĕсем кайнă.

Семинарсенче республикăри пур хор кружок руководителĕсен те вĕренмелле.

Семинарсем 40 сехетлĕ программа тăрăх пулса иртеççĕ.

Ялхуçалăх специалисчĕсен канашлăвĕ

ШĂХАСАН. Районти ялхуçалăх специалисчĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарас тĕлĕшпе январь уйăхĕнче тунă ĕçсен итогĕсене пăхса тухрĕç, умра тăракан задачăсене палăртрĕç.

Кунсăр пуçне, икĕ лекци пулчĕ. «Академик Павлов вĕрентĕвĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре усă курасси» темăпа ялхуçалăх институчĕн преподавателĕ Ф. Иванова юлташ, «Чăх-чĕпсен сикекен чирĕсем тата вĕсенчен мĕнле сыхланмалла» темăпа Т. Морозова ветврач лекци вуласа пачĕç.

Специалистсем лекцисене пысăк тимлĕхпе итлерĕç.

Н. СТЕПАНОВ.

„Спартак" спорт обществи членĕсен ăмăртăвĕ

Февралĕн 11—12-мĕшĕсенче Шупашкарта «Спартак» спорт обществи членĕсен хĕллехи спорт енĕпе республикăра мала тухассишĕн ăмăрту пулса иртрĕ. Унта йĕлтĕрçĕсемпе конькипе чупакансен 25 команди хутшăнчĕ, вĕсенче пурĕ 167 çын пулчĕ.

18 тата 10 километра йĕлтĕрпе ăмăртса чупса Шупашкарти «Металлист» артель коллективĕн представителĕ Прохоров юлташ лайăх тĕслĕх кăтартрĕ Хĕрарăмсенчен 5 километра ăмăртса чупса «Красный кустарь» артель представительници Смирнова мала тухрĕ Çак дистанцие вăл 30 минут та 15 секундра чупса тухрĕ 8 километрлă дистанцие пуринчен малтан Красноармейски районĕнчи Енĕшкассинчи «Стрела» промысла артель членĕ Никитина спортсменка чупса тухрĕ, малти вырăна йышăнчĕ.

Конькипе 500 тата 1 500 метра ăмăртса чупса каллех Енĕшкассинчи «Стрела» артель представителĕ Никандров юлташ лайăх тĕслĕх кăтартрĕ Хĕрарăмсем 500 тата 1.000 метр чупнă ăмăртура малти вырăна Брайкова (Шупашкарти «Красный кустарь» артель) спортсменка йышăнчĕ.

Икĕ кун ăмăртнă хыççăн хутăш командăсенчен пĕрремĕш вырăна Енĕшкассинчи «Стрела» артель йĕлтĕрçисен тата конькипе чупакансен командисем йышăнчĕç. (Командăсен тренерĕ Ерлаков юлташ). Иккĕмĕш вырăна Канашри «Дружба» артель команди тухрĕ.

Хĕрарăмсенчен малти вырăна Сĕрпÿри профтехшкул команди, иккĕмĕш вырăна Шупашкарти «Красный кустарь» артель команди йышăнчĕ

Арçынсенчен пĕрремĕш вырăна Ишлей районĕнчи «Быстрый» артель, иккĕмĕш вырăна Шупашкарти «Металлист» артель коллективĕсен командисем йышăнчĕç.

Паха тĕслĕх кăтартнă уйрăм спортсменсене дипломсемпе хаклă парнесем панă.

Хавасла тĕлпулу

Çак куна кашниех чылай вăхăт кĕтнĕ. Вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн халĕ тĕрлĕ хуласенчи аслă шкулсенче вĕренекенсем тăван хулана, хăйсем темиçе çул çаярах вĕреннĕ шкула, тантăшсем патне янă çырусенче яланах: «Кашни çул пулакан тĕлпулура курăнаçăпăр. Эсир те пырăр, кĕтетпĕр», тесе çырнă.

Шкулта çак тĕлпулăва кашни вĕренекен хатĕрленнĕ. Уйрăмах кăçал вуннăмĕш класран вĕренсе тухакан çамрăксем хавасланса кĕтнĕ. Вĕсен хăйсен пулас специальноçĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлмелле. Хăш институтра вĕренме кĕресси çинчен аслăрах юлташсемпе калаçса пăхмалла. Экзамен тытма йывăр-и, камсем вĕренеççĕ, вĕренме, пурăнма условисем лайăх-и? Ыйтса пĕлмеллисем те сахал мар пулнă.

Кĕтнĕ кун çитрĕ. Тĕрлĕ хуласенчен каникула килнĕ студентсем малтанах палăртнă вăхăтра шкула пуçтарăнчĕç. Камсем кăна çук пулĕ унта! Мускаври, Ленинградри, Горькири, Хусанти, Свердловскинчи тата ытти хуласенчи институтсемпе университетсенче вĕренекен студентсем. Пурте вĕсем тĕрлĕ çулсенче çак вăтам шкулта вĕреннĕ, вуннăмĕш класран вĕренсе тухса аттестат илнĕ. Вĕсене çак шкул, халĕ те кунта ĕçлекен учительсем пĕлÿ панă, пурнăç çулĕ çине тăма, професси суйласа илме пулăшнă. Кайран вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн, вĕсем тĕрлĕ вырăнсене саланнă. Анчах халĕ вĕсем каллех тĕл пулаççĕ. Учительницăсем хăйсен ученицисем пулнă çамрăксене çав тери ăшшăн кĕтсе илеççĕ.

— Вера Ивановна, чĕререн пысăк саламсем. Сире хула Советне депутата суйлама кандидата тăратнине пĕлтĕм. Савăнатăп, чĕререн савăнатăп уншăн, — тет халĕ çеç пырса çитнĕ Галя Петрова В. И. Козловăна ыталаса.

— Галя, пĕрре те улшăнман-çке эсĕ, мĕн тери хавасла!

Студенткăсем пĕрин хыççăн тепри пырса кĕреççĕ. Вĕсем хăйсем вĕреннĕ классене кĕрсе кураççĕ, тахçан ларнă парттăсене шыраса тупаççĕ. Пионерсен пÿлĕмĕсенче пулаççĕ. Савăнăçлă калаçăвăн вĕçĕ-хĕрри пуласлăн та туйăнмасть.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ хĕрачасен 3-мĕш вăтам шкулĕн директорĕ В. И. Козлова юлташ (сылтăмран иккĕмĕшĕ) иртнĕ çулсенче çак шкултан вĕренсе тухнă студенкăсем хушшинче.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Сакăр сехетре шкулăн аслă залĕ вĕренекенсемпе, тĕлпулăва килнĕ студенткăсемпе, вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсемпе тулать.

Шкул директорĕ В. И. Козлова юлташ иртнĕ çулсенче вуннăмĕш класран вĕренсе тухнă çамрăксем халĕ ăçта тата мĕнле вĕренни çинчен, вĕренсе специальноçть илнисем кам пулса ĕçлени çинчен каласа парать.

— Вăтам шкултан вĕренсе тухнисем пурте пĕкех аслă шкулсене вĕренме каяççĕ. Кирек ăçта вĕренсен те вĕсем хăйсен малтанхи учителĕсене, шкулне асра тытаççĕ,—тет В. И. Козлова юлташ

Унтан вăл пĕлтĕр Х-мĕш класран питĕ лайăх вĕренсе тухнă Лидия Анисимовăна ылтăн медаль памалла тунă приказа вулăса парать, медале Л. Анисимовăна парать.

Лидия Анисимова халĕ Горькири политехнически институтра вĕренет. Шкулта лайăх вĕренме кирлĕ условисем туса панăшăн вăл партипе правительствăна, аслă Сталина тав тăвать.

— Вăтам шкул институтра вĕренме кĕме çителĕклĕ пĕлÿ парать. Тăрăшса вĕренни çеç кирлĕ. Пирĕн чылай çамрăксем техникăллă аслă шкулсене вĕренме кайма ĕмĕтленеççĕ. Çавăн пек çамрăксене эпĕ черчени предметне те тивĕçлипе хисеплеме сĕнетĕп.—тет вăл.

— Манăн атте пенсионер, анне заводра ĕçлет. Капитализмлă çĕршывра ман пек çамрăксем институтра вĕренесси çинчен шухăшлама та пултараймаççĕ,—тет Люся Рафаилова.— Эпĕ Ленинградри электротехнически институтра ăнăçлăн вĕренетĕп. Государство пулăшнипе студентсене вĕренме лайăх условисем туса панă. Эпĕ институтран вĕренсе тухсан, коммунизмăн аслă стройкисенчен пĕринче—Шупашкар ГЭС-не тунă çĕрте ĕçлеме ĕмĕтленетĕп.

Горькири А. Жданов ячĕпе тăракан политехнически институтра вĕренекен Г. Петрова, Эльза Семенова студенткăсем, Ленинградри Герцен ячĕпе тăракан педагогика институчĕн студентки Регина Читнаева, Ленинградри химипе технологи институчĕн студентки Роза Бардасова, Жданов ячĕпе тăракан университетран Д. Данилов, Горькири университетран Ира Зеленова тата ыттисем те тухса каларĕç. Пурте вĕсем хăйсем вĕренекен институтсемпе университетсене, пулас специальноçĕсене мухтаса калаççĕ. Кăçал Х-мĕш класран вĕренсе тухакансене хăйсем патне вĕренме пыма чĕнеççĕ.

Итлесе ларнă чухне çамрăксемшĕн чĕререн савăнатăн. Мĕн тери телейлĕ те хавасла пирĕн çĕршыври çамрăксем! Вĕсен умĕнче анлă çул, пысăк правăсем. Хăйĕн пуласлăхĕ çине кашни çамрăк шанчăклăн пăхать, ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕрессе çирĕп шанать. Çавăнпа вĕсем вĕренсе Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн, коммунизм обществи туса çитерессишĕн ырми-канми ĕçлеме пулаççĕ.

Хавасла тĕлпулу нумая пычĕ. Кашниех хăйĕн шухăш-кăмăлне каласа пама тăрăшать. Сÿрçĕр иртсен тин вĕсем: «Çитес çул çак вăхăтра каллех çакăнта тĕл пулăпăр. Унччен сывă пулăр», тесе пĕр-пĕрне сывлăх суна саланчĕç.

Н. МИНИН

Шупашкарти хĕрачасен 3-мĕш вăтам шкулĕ

Редакторшăн М. Н. ЯКИМОВ.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ
Февралĕн 15 мĕшĕнче — чăвашла спектакль
«ÇЕМЬЕ ЧЫСĔ»
Февралĕн 16 мĕшĕнче — вырăсла спектакль
«ЗЕМНОЙ РАЙ»
Февралĕн 17 мĕшĕнче — чăвашла спектакль
«НАЗАР СТОДОЛЯ»
ЧАСАХI — чăвашла спектакль
«ВИÇЕ ТУЙ»
Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67 редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54 промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99 ялхуçалăх пайĕ—3-07, культура пайĕ—3-61, совет строительстви пайĕ—3-81, çырусен пайĕ 7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00998

Типографи №1 Чувашполиграфиздата.

Тираж 20.000 экз.